24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
ФЕВРАЛЬ
12
ЮНКУН
35 (5750) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ.

Шкулсенчи парторганизацисен задачисем

Учитель ĕçĕ—мĕнпур интеллигентлă ĕçсен хисепĕнче чи мухтавлă ĕç пулса тăрать. Рабочи, колхозник, инженер, летчик, академик—пурте, пурте пирвайхи пĕлӳсене учительрен илеççĕ. Учитель ачасен пултарулăхĕсене тата таланчĕсене ӳссе сарăлма пулăшать. Ахаль мар ĕнтĕ пирĕн çĕршывра учительсен ĕçне çав тери пахана хурса хакласçĕ. Чи лайăх ĕçлекен учительсене, вăл хисепре пирĕн Чăваш республикинчи учительсене те, Совет Союзĕн орденĕсемпе наградăланă тата тава тивĕçлĕ учитель ятне панă.

Учительсем—нумай йышлă çĕнĕ интеллигенции, халăх интеллигенцийĕн, социализмлă интеллигенцин пысăк отрячĕ пулса тăраççĕ.

Пирĕн шкулăн, мĕнпур учительсен тĕп задачи—вĕренекен çамрăксене çирĕп пĕлӳсем тата программа материалне вĕрентсе пынă май практикăллă хăнăхусем парасси, Совет Союзĕн ăнланулла та активлă гражданĕсем пулас çамрăксене коммунистла воспитани парасси пулса тăрать. Ку задачăна пурнăçа кĕртме вĕренекенсем хушшинче ăнланулла дисциплина çирĕп пулни кирлĕ.

Шкулсенчи пĕтĕм организацисем: профсоюз, комсомол, пионер организацисем—шкулăн тĕп задачине пурнăçа кĕртес тĕллевпе ĕçлесе пыраççĕ. Çак мĕнпур организацисен ĕçĕсене шкулсенчи пуçламĕш парторганизацисен ертсе пырас пулать. Коммунист-учительсен мĕнпур учительсене ырă пример кăтартса, вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче тата обществăллă ĕçре те малта пулса, шкулăн тĕп задачине пурнăçа кĕртессишĕн пыракан кĕрешӳре çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ туса пымалла.

Пирĕн шкулсенчи пуçламĕш парторганизацисем нумайĕшĕ хăйсен задачисене тĕрĕс ăнланса, активлă ĕçлесе пыраççĕ. Сăмахран, Шупашкарти 7-мĕш номерлĕ шкулти пуçламĕш парторганизаци вĕрентӳ пахалăхне ӳстерес ыйтупа яланах интересленет. Кунти парторганизаци хăйсен шкулĕнчи вĕренӳ пахалăхĕ çинчен коммунистсен пухăвĕнче сӳтсе-явать, класри руководитель пулса ĕçлекен коммунистсен отчечĕсене итлет. Пуçламĕш парторганизаци шкул пурнăçĕпе ĕçĕнчи çакăн пек ыйтусене тăтăшах сӳтсе-явни тата конкретлă решенисем йышăнни, вĕсене пурнăçа кĕртсе пыни, паллах ĕнтĕ, шкулăн тĕп задачисене пурнăçа кĕртес ĕçре пит те пысăк пулăшу парать.

Çавăн пекех, пирĕн корреспондент çырса пĕлтернĕ тăрăх, Елчĕкри вăтам шкулти парторганизаци те шкулта пысăк авторитетпа усă курать. Вăл вĕрентӳ пахалăхне ӳстерессишĕн тăрăшать, учительсем хушшинче политикăллă агитаци ĕçне организацилет, шкулти обществăллă организацисене ертсе пырать. Ку шкулти коммунист-учительсем шкулти вĕрентӳ ĕçĕнче тата обществăллă ĕçре те малта пыраççĕ. Çапла пулмалла та, коммунистăн пур ĕçре те малта пырса, хăй хыççăн массăсене ертсе пымалла!

Учительсен педагогика пĕлĕвĕсене, мастерлăхне тата политикăллă виçине ӳстересси—шкулсенчи парторганизацисен хисеплĕ ĕçĕ. Ку вăл шкулăн тĕп задачине пурнăçа кĕртессипе таччăн çыхăнса тăрать.

Учительсене хăйсен квалификацине ӳстерме пулăшнин ырă примерĕсем пирĕн шкулсенче нумай. Сăмахран, Патăръелĕнчи ялхуçалăх вăтам шкулĕнче кĕркуннерепех учительсен педагогика квалификацине ӳстерекен кружок ĕçлет. Ку шкулти учительсем паллă педагог Макаренкон педагогикăллă наследствине вĕренеççĕ. Ырă пример,—кун пек ĕçе пур çĕрте те сарас пулать. Чаплă педагогсен опытне, уйрăмах Макаренкон педагогикăллă наследствине вĕренессине кашни шкултах организацилемелле.

Харпăрхăй тĕллĕн малалла вĕренсе пыма тăрăшман, ĕç çине тимсĕр пăхакан, политика тĕлĕшпе ӳссе пыман, обществăллă ĕçе хутшăнман учительсене хăйсен обязанноçĕсем çине тивĕçлипе пăхма хушас пулать. Пĕлӳ — учителĕн чи хаклă пуянлăхĕ, пĕлӳве ӳстересси—учителĕн кулленхи интересĕ пулмалла.

Чылай учительсене аттестаци комиссийĕсем паллă срокра педагогикăллă образовани илме хушса хăварнă. Нумай учительсем заочниксем пулса тăраççĕ. Вĕсене ăнăçлăн вĕренсе пыма шкулсенчи пуçламĕш парторганизацисемпе комсомол организацисен кулленех пулăшмалла. Заочно вĕренекен коммунист-учительсен ку ĕçре те пример кăтартса пырас пулать.

Учительсем пурте парти историне, марксизм-ленинизм теорине вĕренессине организацилесси—шкулсенчи пуçламĕш парторганизацисен чи малтан тата кулленех туса пымалли ĕçĕ.

«...Наукăн пĕр отраçли пур,—тесе калать Сталин юлташ,—вăл отраслĕне пĕлни наукăн пур отраçлисенчи большевиксемшĕн те обязательно пулма тивĕç, çакă вăл—марксистла-ленинла наука, общество çинчен, общество аталанăвĕн законĕсем çинчен, социализм строительствин аталанăвĕн законĕсем çинчен, коммунизм çĕнтерĕвĕ çинчен вĕрентекен наука».

Çак наукăсен наукине, марксизм-ленинизм теорине пирĕн кадрсем, вăл хисепрех учительсем те, çине тăрса вĕренсе пыни кирлĕ. Ку тĕлĕшпе те пирĕн шкулсенче ырă тĕслĕхсем пур. Акă, сăмахран, Шĕнерпуçĕнчи (Октябрьский район) вăтам шкулти учительсем парти историне тăрăшса вĕренеççĕ. Ку шкулта 9 учитель «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вăтам звено тăрăх вĕренсе тухнă, халĕ вĕсем первоисточниксем тăрăх вĕренеççĕ тата ытти учительсем те «Кĕске курсăн» юлашки сыпăкĕсене вĕренсе пыраççĕ. Çак шкулта И. А. Васильев юлташ политэкономи ыйтăвĕсене Карл Марксăн «Капиталĕ» тăрăх вĕренет тата философи ыйтăвĕсене вĕренсе пырать. Парти историйĕпе марксизм-ленинизм теорине учительсен пурин те çакăн пек тăрăшса вĕренес пулать. Вĕсене ку ĕçре ВКП(б) райкомĕсен кулленех пулăшса пымалла.

Учительсем хушшинче ĕç дисциплинине çирĕплетесси, шкул ачисен ашшĕ-амăшĕсем хушшинчи ĕçе тата учительсем политпросвет учрежденисен ĕçне хутшăнассине организацилесси,—çаксем те шкулсенчи парторганизацисен кулленхи ĕçĕсем пулса тăраççĕ. Федякино ялĕнчи интеллигенци чĕнсе каланине сӳтсе-явнă чухне кашни шкултах учительсем халăх хушшинчи политикăллă-массăллă ĕçе хутшăнма обязательствăсем илнĕччĕ. Обязательствăсене пурнăçа кĕртес пулать, ку ĕçе парторганизацисен пуçарса пымалла.

Шкулта учительсен ĕç дисциплинине тата вĕренекенсем хушшинчи ăнланулла дисциплинăна çирĕплетессишĕн кĕрешнипе пĕрлех, сайра-хутра тĕл пулакан тискерлĕхе—хăшпĕр учительсем вĕренекенсем çине ал хунине тата педагогикăна хирĕçле ытти меслетсемпе усă курнине—хирĕç кĕрешсе пымалла. Кунашкал тискер йăласем пĕтсе пыраççĕ, анчах киревсĕр йăласенчен хăтăлман çынсем тупăнкаласçĕ-ха. Сăмахран, 1940 çулта Куславкка районĕнче вĕренекен ачасене хĕненĕшĕн виçĕ учителе суд туса тивĕçлипе айăпланă. Çав районрах Курочкинăри вăтам шкулти учительница Бабушкина пĕр ученике кӳрентерекен сăмахсемпе вăрçса шкултан хăваласа кăларса янă. Куславккари вăтам шкулти учитель Кольцов, кашни ача мĕнле вĕреннине уйрăмăн пăхмасăр, пĕтĕм класĕпех «плохо» паллă лартса панă.

Çавнашкал педагогикăна хирĕçле йăласемпе меслетсене валли совет шкулĕнче вырăн çук. Чăрсăрлăхпа тискерлĕх вĕренекенсем хушшинчи дисциплинăна япăхтарма кăна пултараççĕ,—ун пек йăласене тĕп тăвас пулать. Совет учителĕ вĕренекенсенчен çирĕп ыйтма, вĕсене хисеплеме тивĕçлĕ,—кун пек учителе вара вĕренекенсем хисеплеççĕ, унăн авторитечĕ яланах çӳлти вырăнта тăрать.

Çапла ĕнтĕ, шкулсенчи парторганизацисен вĕрентӳ пахалăхне ӳстерес тĕлĕшпе куллен-кунах ĕçлесе пымалла, вĕсен ытти мĕнпур ĕçсене çак тĕп задачăна пăхăнтарса туса пырас пулать.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Чкаловри ялхуçалăх институтне А. А. Андреев юлташ ятне парасси çинчен

Чкаловри ялхуçалăх институтĕнчи студентсем, профессорсем, преподавательсем, административно-технически работниксем, çавăн пекех Чкалов облаçĕнчи область парторганизацийĕсемпе совет организацийĕсем ыйтнине пурнăçа кĕртсе, института **А. А. Андреев** юлташ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1941 çулти февралĕн 10-мĕш.

Литвари Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн V С'езчĕ

КАУНАС, февралĕн 9-мĕш. (ТАСС). Паян каçхине Литвари Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн V съезчĕ хăйĕн ĕçне туса пĕтернĕ.

Снечкус юлташăн отчетлă доклачĕ тăрăх съезд Литвари Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕн политикăллă линине тĕрĕс, практикăллă ĕçне çителĕклĕ, тесе йышăннă.

— Съезд,—тенĕ резолюцире, — Литвари компартин тĕп задачи — 1941 çулта халăх хуçалăхĕн планне, республикăна индустриализацилес ĕçе большевикла пурнăçа кĕртесси пулать, тесе шутлать.

Ялхуçалăх ĕçĕнче съезд, çуракине большевикла хатĕрленсе ирттерес ыйтусем — пĕрремĕш черетри задача пулса тăраççĕ, тесе шутлать.

Литвари Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитетне тата ревизи комиссине суйланă. ЦК составĕнче—17 член тата 16 кандидат.

„Вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстермелли мероприятисем çинчен“ СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) 1941 ç. январĕн 9-мĕшĕнче йышăннă постановленине пурнăçа кĕртесси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ 1941 çулти февралĕн 8-мĕшĕнче йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) «Вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстермелли мероприятисем çинчен» 1941 çулти январĕн 9-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ **çапла йышăнаççĕ:**

1. Наркоматсемпе Управленисем тăрăх 1941 çулта куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе, 1926/27 çулти хакпа, 13.636,3 пин тенкĕлĕх задани çирĕплетес, е вăл 1940 çулти производствăпа танлаштарсан 161,5 процент пулать. Промкооперации тăрăх куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе (1932 çулти хакпа) 50.140 пин тенкĕлĕх задани çирĕплетес, е вăл 1940 çултипе танлаштарсан 127,4 процент пулать, вăл шутран: Древпромсоюз тăрăх — 7.000 пин тенкĕлĕх, Швейпромсоюз тăрăх — 16.770 пин тенкĕлĕх, Промсоюз тăрăх—20.837 пин тенкĕлĕх, Тарпромсоюз тăрăх — 1.301 пин тенкĕлĕх тата Коопинсоюз тăрăх — 4.232 пин тенкĕлĕх.

2. 1941 çулта Наркомместпромпа Наркомпищепром предприятийĕсем тата промкооперации артелĕсем туса кăлармалли куллен кирлĕ таварсен çĕнĕ изделийĕсен ассортиментне çирĕплетес.

3. Наркомместпром, Наркомпищепром тата промкооперации енĕпе 116 çĕнĕ мастерскойсемпе производствăсем организацилемелли плана çирĕплетес.

Наркоматсемпе промкооперации руководителĕсене, ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсен председателĕсене тата ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене каçни çĕнĕ объекта эксплоатацине парассине тата халиччен хи мастерскойсене сарассине çирĕплетсе панă срокасенче пурнăçа кĕртме хушас.

4. Куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе вырăнти промышленноçа тĕреклетес тата аталантарас шутпа, Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕн, Строительство материалĕсем тăвакан промышленность Управленийĕн тата Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариачĕн районсенчи промышленноçĕн мĕнпур предприятийĕсене пĕрлĕхлĕ Райпромкомбината пĕрлештерсе, республикăри пур районсенче те Райпромкомбинатсем организацилес, Райпромкомбинатсем ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсене пăхăнса тăмалла тăвас.

Апат-çимĕç промышленноçĕ ытларах аталаннă Шупашкар хулинче тата Канаш, Çĕмĕрле, Сĕнтĕрвăрри тата Çĕрпӳ районĕсенче, Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕпе Строительство материалĕсем тăвакан промышленность Управленийĕн районсенчи промышленноçне пĕрлештерсе тăракан Райпромкомбинатсемпе пĕрлех, Наркомпищепромăн районсенчи предприятийĕсенчен Райпищекомбинатсем организацилес.

5. Наркомфинпа Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Госплана, Наркомместпромпа тата Наркомпищепромпа пĕрле, РСФСР Совнаркомĕн кăтартăвĕсем тăрăх Райпромкомбинатсемпе Райпищекомбинатсен структурипе штачĕсене февралĕн 13-мĕш тĕлне Чăваш АССР Совнаркомĕнче çирĕплетме тăратма хушас.

6. ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) йышăннă постановлени тăрăх промкооперации ĕçне тӳрремĕнех ертсе пырассине АССР Совнаркомĕсем, облаçсемпе крайсен исполкомĕсем çине хунă май, Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Госплан çине çак ĕçсене хурас:

а) промысла кооперацийĕн предприятийĕсем продукци туса кăлармалли заданисене туса хатĕрлесси;

б) материаллă фондсене, чĕртаварсене, оборудованине валеçмелли плана тата вĕсене илмелли план-заявкăсене туса хатĕрлесси;

в) промысла кооперацийĕ тăрăх капитальнăй ĕçсене планласси; промкооперации грузĕсене турттарса кайма чугунçул вагонĕсем кирли çинчен заявкăсем хатĕрлесси.

7. 1941 çулта республика тăрăх 4097 сысна тăрантарса самăртма задани çирĕплетес, вăл шутран: суту-илӳ организацийĕсемпе промкооперации тăрăх — 2.663 пуç, кану çуртĕсем, санаторисем, больницăсем, ача-пăча учрежденийĕсем тата инвалидсен çуртĕсем тăрăх — 901 пуç, Маслопром предприятийĕсем тăрăх — 250 пуç тата ытти енĕпе — 283 пуç.

8. Промышленноçлă предприятисемпе суту-илӳ организацийĕсем çумĕнче подсобнăй хуçалăхсем организацилес: 35 енерен сĕт-çу хуçалăхĕсем — 6, 6.300 чăхран, 245 хуртан тата 100 кăвакалтан кайăк-кĕшĕк фермисем — 10, 480 хурт-хăмăр çемьинчен утарсем — 14.

9. 1941 çулта пулă тытмалли заданине çирĕплетес: Чăваштерг тăрăх—75 центнер, столовăйсемпе ресторансен Тресчĕ тăрăх—60 центнер, Чăвашсоюз тăрăх—100 центнер, Леспродторг тăрăх—300 центнер тата Промсоюз тăрăх—200 центнер. Госпланпа Рыбнадзора кӳлĕсене кăтартнă организацисене çирĕплетсе памалли плана виçĕ кун хушшинче Чăваш АССР Совнаркомне тăратма хушас.

10. 1941 çулта туса илнĕ пахча-çимĕçсенчен суту-илӳ системисен предприятийĕсенче апат-çимĕç туса хатĕрлемелли задание 5740 тонна чухлĕ хисеппе çирĕплетес, вăл шутран: йӳçĕтнĕ купăста—2.210 тонна, тăварланă хăяр—1729 тонна, тăварланă помидор—345 тонна, типĕтнĕ улма-çырласем — 40 тонна, типĕтнĕ пахча-çимĕçсем—100 тонна, повидло-варени тата ыттисем те—508 тонна, томат-пюре—51 тонна провансаль купăста—35 тонна, маринованнăй хăяр—20 тонна, маринованнăй кăмпасем тата тăварланисем—400 тонна, шӳтернĕ панулмисем—300 тонна, маринованнăй çырласем—2 тонна хатĕрлемелле тата пахча-çимĕçсенчен апат-çимĕç туса хатĕрлекен пунктсем 63 организацилемелле, вăл шутран: Чăвашсоюз тăрăх — 44, Чăваштерг тăрăх — 8, Плодоовощтрест тăрăх—9, столовăйсемпе ресторансен Тресчĕ тăрăх 2 пункт.

11. 1941 çулта суту-илӳ организацийĕсем ялхуçалăхĕн продуктисене, тĕштырăсемсĕр пуçне, хатĕрлемелли децзаготовкăн заданине 9742 тонна чухлĕ хисеппе çирĕплетес.

12. Колхозсенче çулсеренех 220 пин штука зеркальнăй карп ĕрчетмеллĕх çĕнĕ пулă питомникĕсем тума тата Чăвашрыбтрест халиччен тытса тăнă пулă питомникне 70 пин штука пулăран 150 пин штука пулăна çитерсе пысăклатма хушса, колхозсенчи пĕвесемпе кӳлĕсенче 362,3 гектар лаптăк çинче пулă ĕрчетме хушса задани çирĕплетес, колхозсенчи пĕвесемпе кӳлĕсенче пулă ĕрчетмелли заданине районсем тата объектсем тăрăх валеçсе парас.

Чăвашрыбтрестăн халĕ пур пулă питомникĕ колхозсем зеркальнăй карп пама ыйтнине пурнăçа кĕртме пултарайман пирки, РСФСР Совнаркомĕнчен Чăваш АСС Республикине 120 пин штукăран кая мар зеркальнăй карп кӳрсе килме Чăвашрыбтреста наряд пама РСФСР Наркомрыбпромне хушма ыйтас.

13. Вăрман хатĕрлекен организацисене халĕ туса кăларакан куллен кирлĕ продукцисен ассортиментне анлăлатма тата 1941 çулта, халĕ туса кăларакан япаласемсĕр пуçне, çак япаласене туса кăларассине пурнăçа кĕртме хушас: Наркомлес тăрăх—йывăç кĕреçесем, кĕвентесем, урапа çитаррисем туса кăларассине; вăрман сыхлакан тата ĕрчетекен Управлени тăрăх—юман пăтавкасем, йывăç кĕреплесем, çунасем, рыдвансем, çуна тупанĕсем, скипидар, вар, йĕлтĕрсем туса кăларассине тата лачака мăкĕ хатĕрлессине; Вырăнти топливо промышленность Управленийĕпе Чăвашлесзаг тресчĕ тăрăх—пуртă аврисем, хăмăт клещисем, урапа тенелĕсем, туртасем, шăпăрсемпе милкесем туса кăларассине тата хурăнăн шурă хупписемпе урапа-çуна ыратисем хатĕрлессине пурнăçа кĕртмелле.

14. Хурăн хуппинчен тунă тикĕт тата тавар тунă çĕре каякан хурăнăн шурă хуппи питех те кирлине шута илсе, вăрман хатĕрлекен пур организацисене те хăйсене касма уйăрса панă вăрман участокĕсенче сĕткене кĕриччен касмасăр юлнă пур хурăнсен хупписене те сӳсе тухма хушас. Çак пункта пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине тĕрĕслеме Чăваш республикинчи вăрман сыхлакан тата ĕрчетекен Управленине хушас.

15. Чăваш АССР Вырăнти Халăх Комиссариатне 1941—42 çулсенче пысăк мар заводсем: кантăк, минерал краскисем, вĕрие тӳсекен кӳршек чӳлмек таврашсем, çыпăçтармалли материалсем тата сланец кĕлĕсенчен кирпĕчсем тăвакан заводсем тумашкăн, кантăк тума юрăхлă хăйăрсене, вĕрие тӳсекен чӳлмек тума юрăхлă тăмсене, минераллă краскăсене тата сланец кĕлĕсене тĕпчесе сăнас ĕçе организацилеме хушас.

16. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне МТ Станцисенче усă курнă автола тепĕр хут усă курма юрăхлă тăвакан пунктсем сахалтан та икĕ пунктран кая мар йĕркелеме хушас. СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчен Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне усă курнă сĕрмелли çу таврашĕсене тепĕр хут усă курмалла тăвас ĕçе йĕркелеме кирлĕ аппаратсем парса пулăшма ыйтас.

17. Автотранспорт Управленине усă курнă резина изделисенчен ĕçсыннисене тата организацисене кирлĕ япаласем тăвассине организацилеме хушас. РСФСР Автотранспорт Наркоматĕнчен мастерскойсем валли кирлĕ оборудованисем уйăрса пама ыйтас.

18. Хулăсенчен тĕрлĕ япаласем тăвакан промыслан чĕртавар базисене ӳстерес тата вăрман сыхлакан Управленин хăваллăх вырăнĕсенчи хăва хуçалăхне лайăхлатас шутпа, Тарпромсоюз артелĕсене Хĕрлĕ Чутай вăрман хуçалăхĕ тăрăх—180 гектар хăваллă вырăн, Сĕнтĕрвăрри вăрман хуçалăхĕ тăрăх—1000 гектар, опытлă хуçалăх тăрăх—299 гектар, Пăрачкав вăрман хуçалăхĕ тăрăх—120 гектар, Шупашкар вăрман хуçалăхĕ тăрăх—87 гектар, Етĕрне вăрман хуçалăхĕ тăрăх—240 гектар тата Çĕрпӳ вăрман хуçалăхĕ тăрăх—3 гектар уйăрса вăрăм вăхăтлăха усă курма çирĕплетсе парас.

Чăваштарпромсоюзăн 1941 çулта хăваллăх вырăнсене Хĕрлĕ Чутай вăрман хуçалăхĕнче—60 гектар, Сĕнтĕрвăрри вăрман хуçалăхĕнче—220 гектар, опытлă хуçалăхра—297 гектар, Пăрачкав вăрман хуçалăхĕнче—30 гектар, Шупашкар вăрман хуçалăхĕнче—40, Етĕрне вăрман хуçалăхĕнче—120 гектар тата Çĕрпӳ вăрман хуçалăхĕнче—3 гектар тасатса тухмалла.

19. Канашри вагонсем юсакан заводăн, Улатăрти паровозсем тăвакан заводăн, Çĕмĕрле тата Куславкка древкомбиначĕсен директорĕсене тата çав районсенчи ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене предприятисен отхочĕсемпе усă курмалли тата çав отходсенчен вырăнти промышленноçпа промкооперации предприятийĕсенче тĕрлĕ япаласем туса кăлармалли сортсем тăрăх тунă плана, çавăн пекех тата тĕп производствăра усă курма май килмен оборудованисемпе ытти хатĕрсене вырăнти промышленноçпа промкооперацине памалли плана ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомне 1941 çулти февралĕн 15-мĕш тĕлне тăратма хушас.

20. Наркомместпрома, Наркомпищепрома вырăнти чĕртаварсенчен куллен кирлĕ таварсемпе продовольстви туса кăлармалли заданине районсем патне, промысла кооперации союзĕсене хăйсен артелĕсем патне 15 кун хушшинче çитерме хушас.

21. Райсовет исполкомĕсене çак ĕçсене тума хушас:

а) 1941 çулти производствăллă заданисене пиллĕк кун хушшинче пăхса тухса предприятисем патне çитермелле.

б) Райкомбинатсен, Çĕмĕрле, Канаш, Çĕрпӳ тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенче тата Шупашкар хулинче Райгорпромкомбинатсен тата Райгорпищекомбинатсен районри предприятисене хăйсен аллине йышăнас ĕçе вунă кун хушшинче туса çитермелле.

22. Райсовет исполкомĕсене тата ВКП(б) райкомĕсене куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви кăларас ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе мĕн-мĕн туни çинчен тата çак постановленине пурнăçа кĕртсе пыни çинчен февралĕн 25-мĕш тĕлне Совнаркома тата ВКП(б) Обкомне отчет тăратма хушас, малашне çавăн пек отчетсене кашни уйăхрах тăратмалла.

* * *

ВКП(б) Центральный Комитечĕ тата СССР Совнаркомĕ 1941 çулти январĕн 9-мĕшĕнче вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстермелли мероприятисем çинчен йышăннă постановлени хуçалăхпа политика тĕлĕшĕнчен пит те пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ Наркоматсен, промкооперации союзĕсен руководителĕсене, предприяти директорĕсене, райсовет исполкомĕсене тата районри парторганизацисене куллен кирлĕ таварсене тивĕçлĕ ассортиментпа тата пысăк пахалăхлă туса кăларас тĕлĕшпе большевикла тимлĕхпе, пуçарулла ĕçлеме, социализмлă ăмăртăва сарса пыни урлă ĕç тухăçлăхне ӳстерме тата ĕç дисциплинине çирĕплетме, ĕçсыннисем ыйтнине тивĕçтерес тĕлĕшпе вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстересси пирки СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановленине çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пыма чĕнеççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ А. СОМОВ.

ВКП(б) Обком секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

ФЕВРАЛĔН 16-мĕш—УЙРĂМ ОКРУГСЕНЧИ СУЙЛАВ КУНĔ

☆ ☆ ☆

Суйлавçăсен пухăвĕсем

Февралĕн 9-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи 14-мĕш номерлĕ суйлав участокĕнчи суйлавçăсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Суйлавçăсем СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидатпа Иван Матвеевич Чарыков юлташпа тĕл пулчĕç.

— Мана çакăн пек пысăк шанăç панăшăн пĕтĕм чĕререн тав тăватăп, —терĕ И. М. Чарыков юлташ хăйĕн сăмахĕнче. — Сирĕн шанăçа тӳрре кăларассишĕн пĕтĕм вăй-хала парса ĕçлетĕп.

Доверённăй Фадеев юлташ суйлавçăсене февралĕн 16-мĕшĕнче суйлава пĕр харăс хутшăнма, И. М. Чарыков юлташшăн сасăлама чĕнчĕ.

Пуху хыççăн ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Ахазов юлташ пĕтĕм тĕнчери лару-тăру çинчен доклад туса пачĕ.

* * *

Февралĕн 10-мĕшĕнче суйлавçăсем ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне депутата суйлама тăратнă кандидатпа Михаил Андреевич Андреев юлташпа тĕл пулчĕç.

Суйлавçăсен пухуне доверённăй С. Пронюхин юлташ уçрĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче Андреев юлташăн биографийĕ çинче чарăнса тăчĕ.

— Андреев юлташ биографийĕ, —тет вăл, — пирĕн çамрăк кадрсем мĕнле ӳссе пынине кăтартса парать. Андреев юлташа партипе комсомол пăхса çитĕнтернĕ. Вăл Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн, пĕтĕм халăх ĕçĕшĕн тăрăшса ĕçлет. Акă мĕншĕн эпĕ мĕнпур суйлавçăсене Андреев юлташшăн сасăлама чĕнетĕп.

Ун хыççăн Перлов юлташ тухса каларĕ.

— Паян эпир Шупашкар хула Советне депутата суйлама тăратнă кандидатпа М. Андреев юлташпа тĕл пулса калаçатпăр. Вăл Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн чĕререн парăнса ĕçлет, вăл депутат ятне чыслăн тытса пырĕ. Çавăнпа эпĕ сире, суйлавçăсене, февралĕн 16-мĕшĕнче пурте пĕр çын пек пулса хамăр сасăсене Андреев юлташшăн пама, суйлав кунĕ тĕлне хамăр çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн тултарма чĕнетĕп.

Юлашкинчен ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне депутата суйлама тăратнă кандидат М. Андреев юлташ тухса сăмах каларĕ.

Б. ШАВЕЛЕВ.

☆ ☆ ☆

Коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕн чаплă çĕнтерĕвĕшĕн

КУСЛАВККА, февралĕн 11-мĕш. **(Телефонпа).** Енер комбинат клубĕнче суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕ пулса иртрĕ. Рабочисем, инженерсем, техниксем, районри служащисем, Куславкка поселок Советне кĕрекен колхозсенчи колхозниксем СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидатпа Белолипецкий юлташпа тĕл пулса калаçрĕç. Пухура 500 çын ытла пулчĕ. Вĕсем хăйсен кандидатне пысăк хаваслăхпа тата ăшшăн кĕтсе илчĕç.

Белолипецкий юлташ суйлавçăсен пухăвĕнче сăмах каларĕ. Вăл пысăк шанăç хурса хăйне СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама кандидата тăратнăшăн суйлавçăсене тав турĕ. Ĕçсыннисен телейлĕ те савăнăçлă пурнăçĕшĕн, Ленин—Сталин партийĕн ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлеме сăмах пачĕ.

Белолипецкий юлташ хыççăн комбинатри вата рабочи А. Осин, комсомолец-стахановец Николаев, главнăй инженер Волков, колхозница Майорова юлташсем тухса сăмах каларĕç

Суйлавçăсен пухăвĕ округри суйлавçăсем патне чĕнсе çыру çырчĕ. Суйлавçăсем хăйсен çырăвĕнче февралĕн 16-мĕшĕнче суйлава кайса, коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕн кандидачĕшĕн сасăлама пулчĕç.

Производствăллă çĕклену

СОВЕТСКОЕ. Хальхи вăхăтра доверённăйсен канашлăвĕсем пулса иртеççĕ. Суйлав участокĕсенче суйлав кунне мĕнле хатĕрленсе пынине тăлкишпех тĕрĕслеççĕ.

Колхозсем суйлав кунне пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. «Сеятель» колхозран 27 çын вăрманта ĕçлет. Вĕсем пиллĕк кун хушшинче 185 кубометр йывăç хатĕрленĕ. Колхозниксем вăрман ĕçĕнче кулленхи нормăна 160 процент таран тултараççĕ. Агитаци ĕçĕ вăрманта та сарăлса пырать. Коммунист-агитатор Андреев юлташ колхозниксемпе пĕрле вăрманта ĕçлет.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине производствăри çĕнĕ çĕнтерÿсемпе кĕтсе илер

Канашри вагонсем юсакан заводри рессорпа пружина цехĕнчи стахановецсем Я. М. Федотов (сулахайра) тата Н. С. Зимин партин XVIII конференцийĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăрса, хăйсен нормисене 300 процент тултарнă.

К. Бабаев фото-ÿкерчĕкĕ.

▲ ▲ ▲

Ăмăрту ĕç тухăçне ÿстерет

КУКЕÇ. Çĕнъял Уйкас ялсоветне кĕрекен «Арăслан» промартелĕнче пурĕ 234 член. Промартельте ĕçлекенсем хушшинче партин XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăрту анлăн сарăлнă. Кашни кустарь пĕр-пĕрин хушшинче ăмăрту договорĕсем тунă. Договора пурнăçа кĕртсе пынине кашни кунах тĕрĕслесĕççĕ.

Январь уйăхĕнче артель хăйĕн планне 113 процент тултарчĕ. Стахановецсен йышĕ ÿссех пырать. Артельте плана 100 процентран ирттерсе тултаракансен шучĕ çурри ытла. Иртнĕ çулта вĕсен йышĕнче мĕн пурĕ 16 çын кăна пулнă. Çавăнпа та ĕнтĕ 1940 çулти плана артель 75 процент кăна тултарнă пулнă.

Халь чылай стахановецсем, Сăмахван, И. Дмитриева, М. Кузьмин, А. Леонтьев юлташсем пысăк пахалăхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Вĕсем кашни кунхи ĕç нормине 150 процентран кая мар тултараççĕ.

Я. Соколов.

Тракторсемпе комбайнсене юсаса пĕтерне

ШАМАРША, февралĕн 10-мĕш. (Телефонпа). Машинно-тракторнăй станци Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăннă май, конференци уçăлнă тĕле тракторсене пĕтĕмпех юсаса пĕтерме обязательство илнĕччĕ. Çавăн хыççăн ремонтнăй бригадăсем тата рабочисем хушшинче ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ.

Комсомолецсен ремонтнăй бригади тракторсем юсамалли плана тултарчĕ. Пурĕ 11 трактор юсанă. Долгов бригадин план тăрăх 12 трактор юсамалла пулсан, ку таринччен 10 трактор юсанă. Çак кунсенче икĕ трактора ремонтран кăлараççĕ.

Машинно-тракторнăй станцин план тăрăх 32 трактор, 12 комбайн юсамалла. Февралĕн 10-мĕшне 29 трактор, 11 комбайн юсанă. Комбайнсене юсас тĕлĕшпе Аверьянов, Антонкин, Чашкин юлташсем паха примерсем кăтартса ĕçлеççĕ.

Çапла, Шăмăршă машинно-тракторнăй станцийĕ Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци уçăлнă куна тракторсене тата комбайнсене юсаса пĕтернипе кĕтсе илет.

А. ПЛАТОНОВ.

Финанс планне ăнăçлăн тултарассишĕн

Пирĕн республика 1941 çулти пĕрремĕш квартал финанс планне февралĕн 1-мĕшне 22 процента яхăн кăна тултарнă. Ку вăл чылай çĕрте финанс работникĕсем хăйсен ĕçĕсене вăйсăрлатнинчен килет. Районсенчи финанс пайĕсен заведующийĕсем, январь уйăхĕнче пулнă канашлура, партин XVIII конференцине тивĕçлĕн кĕтсе илес майпа, хăйсем çине обязательствăсем илчĕç. Анчах нумайĕшĕ çак обязательствăсене начар пурнăçлаççĕ.

Финанс ĕçĕнче малта пыракан районсем те пур. Элĕк районĕ финанс планне 45 процент тултарнă. Культсбор укçине 46 процента яхăн пухнă. Красноармейский район финплана 36 процент, Калининский район 34 процент тултарнă.

Çав хушăрах чылай районсем юлса пыраççĕ. Çĕмĕрле районнех илер. Вăл кăçал та иртнĕ çулсенчи пекех кая юлса пырать. Пĕрремĕш квартал финанс планне 12 процент çеç тултарнă. Культсбор укçине 5 процент ытларах кăна пухнă.

Тăвай районĕнче те çавăн пекех. Кунта январь уйăхĕнче сахалтан та 170 пин тенкĕ укçа пухмалла пулнă, 64 пин тенкĕ кăна пухнă. Ялхуçалăх налогĕн парăмĕсене пухса пĕтерес, культсбор укçине пухас тĕлĕшпе уйрăмăнах начар ĕçленĕ.

Комсомольский, Шăмăршă, Куславкка, Йĕпреç, Первомайский тата Хĕрлĕ Чутай районĕсем те Çĕмĕрлепе Тăвай районĕсенчен малтах мар. Асăннă районсен экономика тата пурнăç условийĕсем Элĕкпе Красноармейский районсенчен нимĕнпе те уйăрăлса тăмаççĕ. Анчах финанс ĕçĕнче вĕсен питех те пысăк уйрăмлăх курăнать.

Красноармейский районра финанс активĕпе лайăх ĕçлеççĕ. Финанс агенчĕсем хăйсен ĕçне вăхăтра туса пыраççĕ. Янгас ялсоветĕнчи финагент С. Иванов юлташ пĕрремĕш квартал планне февралĕн 1-мĕш тĕлне 110 процент тултарнă. Ялсовет исполкомĕн председателĕ Иванов юлташ налог агентне яланах пулăшса пырать.

Типçырма ялĕнчи финагент Семенов юлташ та квартал планне 90 процент тултарнă. Вăл та ялсовет исполкомĕпе сыхăнса ĕçлет.

Анчах хăшпĕр районсенче налог агенчĕсем çакăн пек паха опытсемпе усă курма тăрăшмаççĕ. Вăрмар районĕнчи Пинер ялсоветĕнчи налог агенчĕ 3010 тенкĕ пухмалла, 201 тенкĕ кăна пухнă-ха. Туллимар вăтам шкул вутăсăр ларать пулсан та, ялсовет исполкомĕ укçа-тенкĕ пухас ĕçпе пĕрре те интересленмест. Вăл хăйĕн ялсоветĕнче укçа-тенкĕ пухас ĕçе вăйлатас вырăнне, укçа ыйтма райсовет исполкомне чупать. Ку ялта уйрăм хуçалăхсенчен тĕрлĕ парăмсем 9.738 тенкĕ пухмалла, ăна шыраса илме васкамаççĕ.

Хурамал ялсоветĕнчи (Советский р.) налог агенчĕ Швецов юлташ пĕр уйăх хушшинче плана 6 процент тултарнă. Укçа-тенкĕ пухас ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанаççĕ пулас кунта.

Хальхи вăхăтра ялсенче культсбор, самообложени, заем укçисене, иртнĕ çулсенчи налогсемпе страховой тÿлевĕсен парăмĕсене пухса çитересси, перекет кассисене вкладсем хутшăнтарасси — пысăк ĕçсем пулса тăраççĕ. Самообложени пухас ĕç ялсовет исполкомĕсене ытларах тивет. Пухусенче сÿтсе-явса, мĕн чухлĕ укçа пухмаллине тата вăл укçа-тенкĕпе мĕн-мĕн тумаллине палăртса хăвармалла, ăна пурнăçа кĕртме халех тытăнмалла. Анчах ку тĕлĕшпе чылай çĕрте васкамаççĕ-ха. Ишлей, Канаш, Октябрьский, Первомайский, Советский, Шупашкар, Шăхасан, Çĕрпÿ районĕсенчи чылай ялсоветсенче самообложени йышăнас пирки пухусем туса ирттермен. Кивĕ парăмсене шыраса илме тăрăшманни уйрăм хуçалăхсене хÿтлесе тăни пулать. Финанс работникĕсем çакăншăн ответлă пулмалла. Парăмсене çак кĕске вăхăтрах пухса çитермелле.

Февральпе март уйăхĕсенче заем укçисене пухса пĕтермелле. Заем укçи пухас, перекет кассинче вкладсен йышне ÿстерес тĕлĕшпе ĕçлеме комсодсене, заем уполномоченнăйĕсене ытларах хутшăнтарни кирлĕ.

И. ЗОЛОТНИКОВ.

Çураки умĕн

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Типçырма ялсоветне кĕрекен «Пахарь» колхоз партин XVIII конференцийĕ ячĕпе ăмăртăва хутшăнса производствăра пысăк çитĕнÿсем турĕ. Çуракинче акса хăвармалли сĕлĕ вăрлăхне 100 проценчĕпех сортласа пĕтернĕ, пăрçапа ясмăка 45 центнер алăпа суйланă. Ялхуçалăх машинисене юсаса хатĕрленĕ. Çĕнĕрен 25 сÿре тунă. 300 гектар çинче юр тытса хăварнă. Çавăнпа пĕрлех уя 1810 лав тислĕк, 1500 лав торф кăларнă. Фосфорит çăнăхĕ 33 центнер кÿрсе килнĕ. Кашни колхозник хăйĕн килĕнче кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухать. Кĕл 15 центнер, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 30 центнер пухнă.

Колхозниксем агротехникăна вĕренеççĕ. Агрокружокра 5 хутчен занятисем туса ирттернĕ.

Колхоз, çуракине хатĕрленнĕ май, транспорт хуçалăхне юсас ĕçе лайăх йĕркелерĕ. Халĕ 48 урапа çиййĕ юсанă, çĕнĕрен 8 мăшăр урапа кустăрми тунă. Енерчĕксемпе хăмăт тавращĕсене юсама 8 çынтан пĕр бригада тунă. Хăмăтсемпе ĕнерчĕксене пĕтĕмпе 75 юсанă.

П. ЯКОВЛЕВ.

~~~~~~

Çĕнĕ суднăсем

Çак çулта Нижне-Иртыш юханшыв пароходстви çĕнĕ суднăсем туянать. Çуркунне çĕнĕ пароходсем тăватă пароход çÿреме пуçлаççĕ. Омскри Сталин ячĕпе тăракан заводра рефрижератора пухма тытăннă, вăл час пăсăлакан продуктсене турттармаллискер пулать.

Куллен кирлĕ таварсен выставки

Калинин облаçĕнчи хуласенче куллен кирлĕ таварсемпе вырăнти чĕртавартан тунă продовольстви выставкисене уçнă. Кимрта выставкăна çĕнĕ фасонсемпе тунă атă-пушмаксене, пуçа тăхăнмалли япаласене, художествăллă вышивка, пÿрт-çуртра тыткаламалли япаласене тăратнă. Ржеври выставкăна «XXIII годовщина Октября» артель хлопчатобумажнăй шарфсем, майкăсем тăратнă.

Ремонт тăвакан мастерскойсем

РСФСР Тĕштырăсен тата выльăх-чĕрлĕх Совхозĕсен Халăх Комиссариачĕ тракторсемпе автомашинăсене юсама автопередвижной мастерскойсем çĕнĕрен 390 мастерской организацилет. Мастерскойсенче квалификациллĕ слесарьсем, оборудованипе ĕçхатĕрĕсем пĕтĕм комплекчĕпех пулаççĕ.

„Швейник“ стена хаçачĕ—пултаруллă организатор

Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан çĕвĕ çĕлекен артельре уйăхра пĕрре тухса тăракан «Швейник» стена хаçачĕ хăй умĕнче тăракан задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать. Хаçат социализмлă ăмăртупа стахановла движенине сарса пыма, стахановецсен пысăк тухăçлă ĕç опычĕсемпе анлăн усă курма, ĕç кунĕн кашни минутипе усă курса ĕçлеме коллектива мобилизацилесе пырать.

Артель иртнĕ çулти производство планне 109 процент ытларах тултарнă. Коллективăн иртнĕ çулталăк хушшинчи ĕçĕсен итогне туса, «Швейник» хаçат çапла çырнă: «Пирĕн артелĕн иртнĕ çулти ĕçĕн результачĕ вăл—стахановецсен паха опычĕсемпе анлăн усă курма пĕлнинче, производствăри дезорганизаторсемпе прогульщиксене хирĕç пĕр хĕрхенÿсĕр кĕрешсе пынинче, 480 минутлă ĕç кунĕпе кашни работник туллин усă курса ĕçленинче пулать», тенĕ.

Иртнĕ çулти çитĕнÿсем çинчен «Швейник» хаçат тĕрĕс итог тăвать. Ăна çак тĕслĕхсем те аван çирĕплетеççĕ: ĕçре уйрăмăнах палăрнă стахановецсене наградăланă. Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Федорова юлташа Хисеплĕ грамота панă. Потапов, Молодова, Маркелова, Судакова, Мочалова, Позникова, Горелова стахановкăсене Всекопромсовет президиумĕ грамотăсем парса вĕсен ĕçĕсене паллă тунă. Рыжова юлташ пуçарнипе артель елка капăрлатмалли япаласем туса кăларма пуçланă.

Производствăри стахановецсен паха опычĕсене çамрăк работницăсем хушшине сарас тĕлĕшпе ятарласа стахановла шкул организациленĕ. Малта пыракан стахановецсен пуçарăвне сарса пыма «Швейник» хаçат вăхăтра пулăшу панă. Иртнĕ çулти ноябрь уйăхĕнче тухнă номерте стахановла шкул çинчен çапла çырнă: «Пирĕн артельре стахановла шкул организацилени кампанилле тата вăхăтлăха ирттерекен мероприяти мар, вăл стахановла ĕçĕн çĕнĕ форми пулать, стахановла бригадăсем, цехсем çине куçма пулăшакан тĕрĕс çул пулса тăрать. Çавăнпа та, малта пыракан пуçарăва хаваслăн йышăнатпăр, вĕсен ĕçне малалла тата ытларах сарса пыма мĕн вăй çитнĕ таранах пулăшса пымалла», тенĕ.

Чăн та, стахановла шкул хăйĕн çимĕçсене пама пуçланă та ĕнтĕ. Стахановла шкулран вĕренсе тухнисенчен халĕ пурте пекех стахановецсем.

Январь уйăхĕнче Ленин ячĕпе тăракан артеле организацилени 11 çул тултарчĕ. Çав хушăра артель мĕнле çитĕнÿсем туни çинчен хаçатра Семечкин юлташ çырнă çырăва кăларнă.

«Швейник» хаçатра ытти ыйтусене те тарăнăн çутатса пыраççĕ. Сăмахран, «Ĕçе лайăхлатмалла» ятлă заметкăра «Пирĕн коллективăн лайăх енĕсем чылай, стахановецсен йышĕ те ÿсрĕ, анчах, продукци пахалăхĕ çителĕксĕртерех-ха. Çавăнпа та, пирĕн малашнехи задача — хамăр туса кăларакан продукци пахалăхĕшĕн ытларах кĕрешесси пулать. Кашни работник пысăк пахалăхлă продукци туса кăларассишĕн кĕрештĕр!», тесе çырнă.

Юлашки вăхăтра «Швейник» хаçат çине тăрсах ĕçри культурлăх тата государство укçи-тенкине перекетлĕ тыткаласси çинчен конкретлăн çутатса пырать.

Партипе правительство государство укçи-тенкине хытă тытса усрама вĕрентеççĕ. Çавăнпа та, пирĕн кашни пуса вырăнлă салатма вĕренни кирлĕ. Çак ыйтăва «Швейник» хаçатра анлăн çутатса параççĕ. Пĕр кунхине артеле таварсем чăркама чăпта кирлĕ пулнă. Завхоз пулса ĕçленĕ Калугина юлташ базарта виçĕ чăпта илет, çав чăптана артеле çĕклесе пынăшăн носильщике 2 тенкĕ тÿлет. Çавăншăн «Швейник» хаçатра Калугинăна хытă критикленĕ. Çав вăхăтрах администрацине государство укçи-тенкине унталла-кунталла салатма юраманни çинчен ăнлантарса панă.

Халĕ кашни работник ВКП(б) XVIII конференцийĕ уçăлнă куна производствăра пысăк çитĕнÿ тунипе паллă тума хатĕрленет. Коллектив январь уйăхĕнчи плана 111 процент тултарнă. Уйрăм стахановецсем (Гаврилова, Горбунова, Архипова, Кузнецова, Сивова, Карпеева, Федорова т. ыт.) уйăхри плана 135 процент таран тултарчĕç. Ку ĕçре «Швейник» стена хаçачĕ яланах организатор вырăнĕнче тăрать.

А. ГРИГОРЬЕВ.

ЧАПЛĂ ДОКУМЕНТ

Сталин юлташ комсомолец Иванов юлташа панă ответ пичетленсе тухнăранпа паян виçĕ çул тултарчĕ. Сталин юлташăн çак отвечĕ марксистла-ленинла наукăна, научнăй социализмăн теорине калама çук пуянлатрĕ.

Научнăй социализмăн марксистла теорине Маркспа Энгельс империализмччĕнхи капитализм тапхăрĕнче тунă. Анчах вăл теори вĕçленсе çитнĕ те малалла аталанма пултараймасть, тесе калама çук. Революциллĕ наука яланах малалла аталанса пырать. Империализмччĕнхи капитализм тапхăрĕнче марксистсем социализм пĕр-пĕр уйрăм çĕршывра çĕнтерме пултараймасть, социализм çĕнтересси мĕнпур цивилизациллĕ çĕршывсенче пĕр вăхăтрах пулса иртет, тесе шутланă. Паллах, вăл вăхăтра, монополизмла капитализмччĕнхи тапхăршăн çав вывод тĕрĕс пулнă.

Пурнăç пĕрмаях малалла шăвать, çавăн майĕпе условисем те улшăнаççĕ. Монополизмччĕнхи капитализм вырăнне монополизмла капитализм йышăнать. Çак çĕнĕ эпохăра—империализм тата пролетариллĕ революцисен эпохинче—Ленин ĕлĕкхи установкăна улăштарма кирлине курать.

Владимир Ильич империализмла капитализм эпохине, вилсе пыракан капитализма тĕпчесе вĕренсе аслă открыти тăвать, марксистла теорие малалла аталантарать, социализм уйрăм çĕршывсенче çĕнтерме пултарасси çинчен калакан çĕнĕ теори тăвать. Çак теорин никĕсĕсене Ленин 1905 çултах ĕнтĕ «Две тактики социал-демократии в демократической революции» ятлă брошюрăра палăртса хунă.

Вунă çулран Владимир Ильич Ленин хăйĕн «О лозунге Соединенных Штатов Европы» ятлă статьинче хăйĕн çĕнĕ теорине татăклă формулировка парать. Вăл унта çапла çырать: «Экономикăллă тата политикăллă аталану пĕртан мар пулса пыни капитализмăн ним иккĕленмелле мар законĕ пулса тăрать. Çакăнтан вара акă мĕн тухса тăрать: социализм малтанлăха нумай мар е пĕр çĕршыврах, уйрăмăн илнĕ, капитализмлă çĕршыврах çĕнтерме пултарать. Çак çĕршывăн çĕнтерÿ тунă пролетариачĕ, капиталистсене экспроприацилесе тата хăй патĕнче социализмлă производство организацилесе, ытти çĕршывсенчи пусмăрта пурăнакан классене хăй çумне явăçтарса пырса, ытти капитализмлă тĕнчене хирĕç тăнă пулĕччĕ...» (Ленин, т. XVIII, стр. 232—233).

Владимир Ильич çак вывод патне тепĕр çултан, 1916 çулта каллех таврăнать. Хăйĕн «Военная программа пролетарской революции» ятлă статьинче татах та социализм пĕр вăхăтрах пур çĕршывсенче те çĕнтерме пултараймасть, вăл малтанлăха пĕр çĕршывра е темиçе çĕршывра çĕнтерет, ыттисем вара хăшпĕр вăхăт хушши буржуаллă е буржуаллă йĕрке умĕнхи çĕршывсем пулнипех юлаççĕ, тесе кăтартса парать.

Капитализм аталанăвĕ пĕртан мар пулса пынине тата историллĕ чылай условисене пула, Россия çакăн пек çĕршыв пулса тăчĕ: кунта империализм сăнчăрĕ вăйсăртарах пулнă, хирĕçÿсем çавтери çивĕчленсе çитнĕ пулнă, революци вăйĕсем çав хирĕçÿсене революциллĕ мелпе татса памалла вăйлă пулнă. Çавăнпа та Сталин юлташ партин историллĕ VI съездĕнче, малаллине витĕр курса тăрса, çапла каланă: «Шăпах Россия социализм патне çул хывакан çĕршыв пуласси пулма пултарман япала мар...», тенĕ.

Ленинпа Сталинăн теорийĕ—уйрăм илнĕ капитализмлă пĕр çĕршывра социализм тума пулни çинчен калакан теори—пирĕн çĕршывра пурнăçа кĕчĕ. Совет çĕршывĕн халăхĕсем, большевиксен партийĕ ертсе пынипе, Сталин юлташ генилле ертсе пынипе, çĕнĕ, социализмлă обществăна тĕпрен илсен туса хучĕç. Анчах рабочи класăн социализмлă общество тăвассишĕн пит йывăр условисенче кĕрешме тиврĕ.

Совет халăхĕн тăшманĕсем: пирĕн çĕршывра социализм тума çук, тесе сÿпĕлтетрĕç, сÿпĕлтетрĕç кăна та мар, ССР Союзĕнче çĕнĕрен капитализма тавăрса лартма тăрăшрĕç.

Халăх тăшманĕсемпе—троцкистсемпе, бухаринецсемпе тата буржуаллă националистсемпе, капитализма каялла тавăрса лартма тăрăшакансемпе вирлĕн кĕрешсе пырса, Сталин юлташ пĕр çĕршывра социализм çĕнтерме пултарни çинчен калакан ленинла теорийĕн тасалăхне сыхласа хăварчĕ, ку теорие общество аталанăвĕн çĕнĕ условийĕсенче малалла аталантарса пычĕ. Вăл çак теори пĕтĕм тĕнчере пысăк вырăн йышăнса тăнине, капитализмлă йĕритавралăх пур чухнех пирĕн çĕршывра тулли социализмлă общество тума май пуррине тата социализм тунă вăхăтра пирĕн çĕршывăн рабочи класĕн, большевиксен партийĕ ертсе пынипе, мĕнле задачăсене татса памаллине те уççăн кăтартса пачĕ. Совет халăхĕ хăйĕн тĕп задачине лайăх пĕлсе тăчĕ, вăл—социализм тăвасси. Çак тĕллев совет халăхне граждăн вăрçи вăхăтĕнче белогвардеецсемпе интервентсене çапса çĕмĕрме, унтан юхăнса кайнă хуçалăха ура çине тăратма вăй парса тăчĕ.

Халăх хуçалăхне ура çине тăратас тĕлĕшпе ĕçленĕ вăхăтра пирĕн çĕршывра социализм тума пуласси çинчен ыйту çивĕччĕн тухса тăрать. Вăл вăхăтра, большевиксен партийĕн аслă политикине пула, совет влаçĕ сывлăш çавăрса илмелĕх вăхăт тупрĕ, экономикăллă çĕнĕ политика çулĕ çинче халăх хуçалăхне ура çине тăратрĕ. Капитализмлă ытти çĕршывсенче пролетариллĕ революци пуласси вăрăма кайрĕ. Капитализм вăхăтлăх относительнăй стабилизаци тапхăрне кĕчĕ. Çакă вăл капитализмăн хирĕçĕвĕсем çĕнĕрен çивĕчленсе каяссине кăтартса тăнă.

ССР Союзĕ те стабилизаци тапхăрĕнче пулнă. Анчах пирĕн стабилизаци капитализмлă стабилизацирен палăрах уйрăм тăнă. Пирĕн стабилизаци Совет Союзĕн политикăллă тата хуçалăхлă вăйĕ пĕрмай ÿссе пыни çинчен каласа панă.

Çак условисенче ССР Союзĕнчи социализм строительствин малашлăхĕ çинчен ыйту тухса тăрать. «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕнче» каланă пек, ыйту çапла тăнă:

«Эпир социализмлă хуçалăх тумалла-и тата ăна тума пултаратпăр-и, е пире урăххи валли, капитализмлă хуçалăх валли çĕре тислĕкпе çемçетсе хума пÿрнĕ-и? ССР Союзĕнче, пĕтĕмĕшпе илсен, социализмлă хуçалăх туса хума пулать-и, туса хума пулать пулсан, ăна капитализмлă çĕршывсенче революци пуласси вăраха кайсан тата капитализм стабилизациленнĕ вăхăтра тума пулать-и? Çĕршывра социализм вăйĕсене пур майсемпе те çирĕплетсе тата сарса пырса, унпа пĕрлех халлĕхе капитализма та кăштах ÿсме май паракан экономикăллă çĕнĕ политикăн çулĕсемпе пырса социализмлă хуçалăх тума пулать-и?» (чăвашла изд., стр. 331).

Пирĕн большевиксен партийĕ, Ленин хушăвĕсене пурнăçласа пырса, пĕртенпĕр тĕрĕс ответ пачĕ: пирĕн социализмлă общество тума кирлисем пурте пур, эпир ăна тăватпăр, эпир çĕнтеретпĕрех!

Çак вăхăтра совет халăхĕн тăшманĕсем татах пуçĕсене çĕклерĕç, вĕсем партие хирĕç тухрĕç, социализм тăвассине хирĕç кĕрешме пуçларĕç. Совет халăхĕн, марксизм-ленинизмăн тăшманĕсене Сталин юлташ тăрă шыв çине кăларчĕ, çапса çĕмĕрчĕ, троцкизма пур фронтсем тăрăх та çапса салатрĕ, социализмлă революцин ленинла теорине малалла аталантарса пычĕ.

Сталин юлташ хăйĕн «К итогам работ XIV конференции РКП(б)», «О социал-демократическом уклоне в нашей партии», «Еще раз о социал-демократическом уклоне в нашей партии» ятлă ĕçĕсенче Ленинăн пĕр çĕршывра социализм çĕнтересси çинчен калакан вĕрентĕвне çĕнĕ, çÿллĕ пусăма çĕклерĕ.

Сталин юлташ, социализмлă революцин ленинла теорине малалла аталантарса пырса, пĕр çĕршывра социализм çĕнтерес ыйтăвăн икĕ енне — шалти тата тулти енĕсене—манмалла маррине пĕр хут кăна мар кăтартса панă. Уйрăмăнах ун çинчен вăл хăйĕн «К итогам работ XIV конференции РКП(б)» ятлă статьинче кăтартса парать.

Ку ыйтăвăн шалти сыхăнусен енĕ — пролетариатпа хресченсем хушшинчи хирĕçÿсене татса парасси, тулти сыхăнусен енĕ—пирĕн çĕршывпа ытти мĕнпур çĕршывсем хушшинчи хирĕçÿ çинчен калать. Вĕсене иккĕшне пĕрле хутшăнтармалла мар, тет Сталин юлташ. Пĕрремĕш ушкăнри хирĕçĕве пĕр çĕршыв вăйĕпех татса пама пулать, иккĕмĕшне—чылай çĕршывсен пролетарийĕсем пĕрлешсен кăна татса пама пултараççĕ.

Сталин юлташ кунта, социализмлă общество тăвассипе социализм татăклăнах çĕнтерессин уйрăмлăхĕсене кăтартса парать.

ССР Союзĕнче социализмлă общество тăвасси çинчен: эпир социализм тума пултаратпăр, эпир ăна хресченсемпе пĕрле, хресченсене рабочи класс ертсе пынипе тăватпăр; рабочи класпа хресченсем хушшинчи хирĕçĕве сирсе яма никĕс пур, мĕншĕн тесен рабочи класăн та, хресченсен те тĕп интересĕсем пĕрех, тесе каланă парти. Эпир хамăр техникăпа экономика енчен кая юлнине те хамăр вăйпах пĕтерме пултаратпăр. Эпир рабочи класпа хресченсен союзне, рабочи класс ертсе пынипе, çирĕплетсе пырсан социализм пирĕн çĕршывра çĕнтеретех, тенĕ парти.

Ыйтăвăн иккĕмĕш енне илсен, паллах ĕнтĕ, капитализмлă йĕритавралăх пур чухне капитализмлă çĕршывсем енчен социализм çĕршывĕ çине вăрçăпа тапăнас хăрушлăх пĕтмест, апла пулсан буржуаллă кивĕ йĕркесем таврăнас хăрушлăх та пĕтмест, тенĕ парти.

«Социализм татăклăнах çĕнтересси вăл—интервенци тума хăтланассинчен, апла пулсан вара, кивĕ йĕркесене каялла тавăрма хăтланассинчен те гарантилессине пĕлтерет, мĕншĕн тесен кивĕ йĕркесене каялла тавăрма мĕн чухлĕ те пулин чăнласах хăтланни тулашран чылаях вăйлăн пулăшнипе çеç, пĕтĕм тĕнчери капитал пулăшнипе çеç пулма пултарать. Çавăнпа та пирĕн революцие мĕнпур çĕршывсенчи рабочисем пулăшса тăни, тата та ытларах, çав рабочисем темиçе çĕршывра та пулин çĕнтерни вăл—чи пирвай çĕнтерÿ тунă çĕршыва хирĕç интервенци тума тата кивĕ йĕркесене каялла тавăрма хăтланассинчен пĕтĕмпех гарантилеме кирлĕ услови, социализм татăклăнах çĕнтерме кирлĕ услови пулса тăрать» (Сталин, «Ленинизм ыйтăвĕсем», чăвашла изд., стр. 138).

Сталин юлташăн çак положенийĕсем паян кун та вăйра, паян кун та совет халăхне коммунизм тунă çĕрте хавхалантарса пыраççĕ.

Тĕпрен илсен социализмлă общество тунине социализм татăклăнах çĕнтерчĕ тесе тĕрĕс мар шутланине Сталин юлташ сивлерĕ. Вăл хăйĕн ответĕнче, социализм строительствин опычĕ çине тайăнса, социализмлă общество тăвасси тата социализм татăклăнах çĕнтересси çинчен тата тепĕр хут питĕ тĕплĕн ăнлантарса пачĕ:

«Пирĕн çĕршыври рабочи класс хăйне пирĕн хресченсем хушшинчи хирĕçÿсене пĕтерсе хума тата вĕсемпе союз тума, пĕр-пĕринпе сыхăнса ĕçлеме пултарать-и? Пирĕн çĕршыври рабочи класс хресченсемпе союзра тăрса, хамăр çĕршыври буржуазине çĕмĕрсе тăкма, унăн çĕрĕсене, завочĕсене, шахтисене т. ыт. туртса илме тата хăйĕн вăйĕпе çĕнĕ, классăр общество, тулли социализмлă общество тума пултарать-и?

Çавăн пек ĕнтĕ, пирĕн çĕршывра социализм çĕнтерес ыйтăвăн пĕрремĕш енĕпе сыхăнса тăракан татса памалли ыйтусем (проблемăсем)» (Сталин юлташ Иванов юлташа панă ответран).

Ленинизм çав проблемăсене татса пама пулать, тесе калать, тулли социализмлă общество тума кирлисем пирĕн пурте пур. Эпир хамăрăн çĕршывра буржуазине хамăр вăйсемпех çĕнтерме тата социализмлă общество тума пултартăмăр.

Парти тĕрĕс каланине, троцкистсем тĕрĕс мар пулнине истори лайăх кăтартса пачĕ. Пирĕн çĕршывра социализм çĕнтерес ыйтăвăн пĕрремĕш енĕпе сыхăнса тăракан проблемăсене СССР рабочи класĕпе хресченсен вăйĕпе татса панă. Пире курайман капитализмлă йĕритавралăх условийĕсенчех, пирĕн большевиксен партийĕ, аслă Сталин ертсе пынипе марксизм-ленинизм тăшманĕсене çапса çĕмĕрсе, тĕпрен илсен социализмлă общество туса хунă. ССР Союзĕнче коммунизмăн пĕрремĕш фазийĕ — социализм пурнăçа кĕчĕ.

Халĕ пирĕн совет халăхĕ классăр социализмлă общество туса çитерсе социализмран майĕпен коммунизм патне куçассишĕн кĕрешет. Паллах, паттăр совет халăхĕ большевиксен партийĕ ертсе пынипе çак задачăна та ăнăçлăнах пурнăçлĕ.

Социализм пирĕн çĕршывра çĕнтересси çинчен тăракан ыйтăвăн иккĕмĕш енне, пирĕн çĕршывпа ытти çĕршывсем, капитализмлă çĕршывсем хушшинчи хирĕçÿсен ыйтăвне эпир татса паман-ха, ку ыйтăва пĕр çĕршыври рабочисемпе хресченсен вăйĕпе татса пама çук та.

Социализм татăклăн çĕнтермелле тăвас тесен, вăрçăллă интервенципе кивĕ строя тавăрса лартас хăрушлăхран пирĕн çĕршыва пĕтĕмпех хÿтĕлесе тăмалла тăвас пулать. Капитализмлă йĕритавралăх вырăнне социализмлă йĕритавралăх туса хуни, капитализмлă пур çĕршывсенче те е ĕçе татса паракан чылай çĕршывсенче социализм çĕнтерни кирлĕ, пĕтĕм тĕнчери пролетариат енчен çирĕп пулăшу кирлĕ. Çав вăхăтрах хамăрăн пĕтĕм совет халăхĕ мĕнпур вăя хурса ĕçлени кирлĕ, ССР Союзĕн оборона хăватне çирĕплетмелле, çар тата экономикăллă вăй-хăватне çирĕплетмелле. Пĕтĕм тĕнчери пролетариат пулăшуне хамăр çĕршыв оборонине вăйлатас тĕлĕшпе хамăр туса пыракан ĕçсемпе, Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота вăйлатас тĕлĕшпе хамăр туса пыракан ĕçсемпе, вăрçăпа тапăнассине тата буржуаллă йĕркесене тепĕр хут тавăрса лартма хăтланассине хирĕç кĕрешме пĕтĕм çĕршыва мобилизацилес тĕлĕшпе хамăр туса пыракан ĕçсемпе пĕрлештерес пулать, тесе кăтартса парать Сталин юлташ.

Халлĕхе, капитализмлă йĕритавралăх пур чухне, социализмлă çĕршывăн тăшманĕсем вăрçăллă интервенципе кивĕ строя тавăрса лартма хăтланасси кашни самантрах пулма пултарать.

Пирĕн çитĕнÿсем—пирĕн социализм çĕршывĕн кашни малалли утăмĕ—пирĕн тăшмансене татах та ытларах çиллентереççĕ, ССР Союзне кураймаслăха вăйлатаççĕ. Буржуази Совет Союзĕнче социализм çĕнтерни пĕтĕм тĕнчери капитализма пĕтерсе хумаллин пуçламĕшĕ пулса тăнине пит те лайăх пĕлсе тăрать. Çавăнпа та буржуази пирĕн çине вăрçăпа килсе тапăнасси çинчен пĕртте манмасть, вăл пĕрмай Совет Союзне хирĕç вăрçăллă интервенци хатĕрлет. Çавăнпа та пирĕн яланах тăшмансене çирĕп отпор пама хатĕр пулмалла.

Сталин юлташ хăйĕн ответĕнче ун çинчен çирĕппĕн асăрхаттарчĕ: «Хамăрăн Хĕрлĕ Çара, Хĕрлĕ Флота, Хĕрлĕ авиацине, Осоавиахима пур майсемпе те вăйлатмалла та тĕреклетмелле. Нимĕнле «ăнсăртлăх» та тата пирĕн тулти тăшмансен нимĕнле фокусĕсем те пире кĕтмен çĕртен килсе ан тивчĕр тесе, вăрçăпа килсе тапăнас хăрушлăх умĕнче хамăрăн пĕтĕм халăха мобилизациллĕ хатĕрлĕхре тытса тăмалла...»

М. ИВАНОВ.

Инçетри çурçĕрте суту-илÿ ĕçне вăйлатни

Камчаткăн, Чукотка çурмаутравĕн инçетри вырăнĕсене, Çĕпĕрти çурçĕрти районсене тата Пăрлă океанри утравсене иртнĕ çулта промышленность таварĕсемпе апат-çимĕç продуктисем 719,4 миллион тенкĕлĕх тăратнă. Кăçал тĕрлĕрен пунктсенче çĕнĕрен 37 магазин, 55 склад, 20 пекарня, столовăйсемпе ресторансем, овощехранилищесем нумай тăваççĕ. Главсеверторгăн базисене продуктсене илсе пыма пуçланă та ĕнтĕ.

Коммунистсен районри пухăвĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Февралĕн 9-мĕшĕнче коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху ВКП(б) Чăваш Обкомĕн V пленумĕн ĕçĕсем çинчен сÿтсе-яврĕ. Парти пухăвĕ районри колхозсем вăйлă тырпул туса илес тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕ.

Тухса калакансем районри колхозсем çуракине питĕ начар хатĕрленни çинчен кăтартса пачĕç. Районра вăрлăхсене сортласа тасатмалли плана 69 процент, ялхуçалăх машинисене юсас тĕлĕшпе плана 40 процент, удобренисем хатĕрлемелли плана 17 процент çеç тултарнă.

Чылай колхозсем пĕр-пĕрин хушшинче вăрлăхсем улăштарма тытăнман. Çавнашкалах вăрлăхсене кирлĕ пек пăхса усрамаççĕ.

«Коммунар», «Победа», «Янмурзино» колхозсенче амбарсенчи вăрлăхсем нÿрлĕ пулнă пирки пăрланса, шăнсаларнă.

Нумай колхозсенче агротехникăна вĕренессине ку вăхăтченех организацилемен.

Коммунистсен районри пухăвĕ парти Обкомĕн пленумĕн решенийĕсене ырларĕ, çуракине хатĕрленес ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

ХАТАЕВСКИЙ.
~~~~~~

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Популярнăй лекцисем çинчен

Партин XVIII съезчĕ массăсене—социализм строителĕсене — коммунистла воспитани парас задачăна малти вырăна кăларса тăратрĕ. М. И. Калинин юлташ хăйĕн докладĕнче татăклăнах кăтартса панă пек, коммунистла воспитани яланах конкретлă пулса пымалла. Ĕçри дисциплинăна çирĕплетесси, ĕç тухăçлăхне ӳстерсе продукци нумайрах тата лайăх продукци туса кăларасси, социализмлă харпăрлăха сыхласси тата ăна çирĕплетсе пырасси, совет патриотизмне, коллективизм туйăмне аталантарса пырасси, массăсене çутта кăларасси—çак ĕçсене пурне те пирĕн кулленех пурнăça кĕртсе пырас пулать.

Коммунистла воспитани ĕçĕнче партипе правительствăн решенийĕсене, тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсене массăсене ăнлантарса парасси пит те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа ĕнтĕ «ЦК ВКП(б), марксизм-ленинизмăн теориллĕ никĕсĕсене пропагандăланипе пĕрлех, партин кулленхи политикине пропагандăлассине уйрăмах пысăк вырăна хурать» (ЦК ВКП(б) 1939 çулти августăн 16-мĕшĕнче йышăннă постановленирен).

Ку постановленирех ЦК ВКП(б) парторганизацисене çакăн пек кăтарту пачĕ: «...партин кулленхи политикипе çыхăнса тăракан ыйтусем тăрăх лекцисемпе докладсем тăвассине сарса ямалла. Партин сахал хатĕрленнĕ членĕсемпе кандидачĕсем валли, рабочисем, колхозниксем валли çакăн пек темăсемпе, сăмахран, социализмлă государство çинчен, мĕн вăл социализм, мĕн вăл коммунизм, производительнăй вăйсен виççĕмĕш пятилеткăри аталанăвĕ çинчен, колхозри личнăй тата пĕрлешӳллĕ пурлăхсемпе интерессем, партин уставĕпе программи çинчен т. ыт. темăсемпе популярнăй, массăллă лекцисем вулассине практикăна кĕртес».

Партин Центральный Комитечĕ кăтартса панине пурнăça кĕртес тĕлĕшпе пирĕн парторганизацисем хăшпĕр ĕçсене туса пыраççĕ. Анчах, йышăнас пулать, популярнăй лекцисем вулас ĕç пит те çителĕксĕр сарăлнă-ха.

Илес тĕслĕхе Шупашкарти тир-сăран комбинатне. Кунта 1940 çулта, тĕнчери лару-тăру çинчен доклад туса панисĕр пуçне, рабочисем валли урăх докладсемпе лекцисем ирттермен. Популярнăй лекцисем ирттерес ĕç республикăри ытти предприятисенче те çителĕксĕр пулса пырать.

Чăн ĕнтĕ, агитаторсем рабочисем хушшинче партипе правительствăн решенийĕсем çинчен калаçусем ирттереççĕ. Анчах кунпах çителĕксĕр, ЦК ВКП(б) кăтартса панă темăсем тăрăх докладсемпе лекцисем вуласа пани, ĕç тухăçлăхне хăпартассипе ĕç дисциплинине çирĕплетесси, социализмлă пурлăха сыхласси, тĕне хирĕç кĕрешесси çинчен рабочисене тарăнăн ăнлантарса парас пулать.

1940 çулта, Федякино ялĕнчи интеллигенци чĕнсе каланине сӳтсе-явнă чухне, республикăри кашни ялтах учительсем, агрономсем, медицина работникĕсем хăйсем çине политпросвет учрежденисен ĕçне активлăн хутшăнса, колхозниксене валли лекцисем вуласа пама обязательствăсем илнĕччĕ. Ку вăл питех те ырă пуçару. Халĕ ĕнтĕ кашни интеллигент хăй çине илнĕ ĕçе пурнăça кĕртни кирлĕ. Совет интеллигенцийĕн пысăк çарĕ пулăшнипе, пур çĕрте те вулав çурчĕсемпе колхоз клубĕсен ĕçне чĕртсе яма май пур,—ку ĕçе тăвасах пулать.

Партин кулленхи политикипе çыхăнса тăракан ыйтусене пропагандăлассине, паллах ĕнтĕ, парти райкомĕсен, çавăн пекех пуçламĕш парторганизацисен организацилесе ертсе пымалла. Лекцисен темисене çирĕплетесси, лекторсене тупассипе вĕсене пулăшса пырасси тата контроллесси—парторгăнсен кулленех туса пымалли ĕçĕ.

Ф. АЛЕКСАНДРОВ.

ВКП(б) Канаш райкомĕн пленумĕ

КАНАШ. Февралĕн 3-мĕшĕнче ВКП(б) райкомĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Пленумра ВКП(б) Чăваш Обкомĕн V пленумĕн итогĕсем çинчен райком секретарĕ Репкин юлташ доклад туса пачĕ. Пленум ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ йышăннă решенисене ырласа, вĕсене çирĕппĕн пурнăçласа пыма пулчĕ.

Докладчик та, пренисенче тухса калаçакансем те район 1940 çулта, 1939 çулпа танлаштарсан, ялхуçалăх ĕçĕсене кĕске вăхăтра тата лайăхрах вĕçленине палăртрĕç. Районри чылай колхозсем пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. Катекри Киров ячĕпе тăракан колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 11 центнер ытла тĕштырă туса илнĕ. Уйрăм участоксенче урпа 33 центнер, пăри 19 центнер тухнă. Çавăн пекех пахча-çимĕçсем те нумай туса илчĕç.

Анчах та Çĕнĕ Ахпӳрт, Йалмачча, Шăртан колхозĕсем ялхуçалăх çулне вĕçлессипе кая юлса пычĕç, вĕсен тырпул тухăçлăхĕ те çителĕксĕр пулчĕ.

Çулте асăннă колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсем кая юлса пынин сăлтавĕ пĕтĕмĕшпех ĕçе тĕрĕс организацилеме пĕлменнинчен тата агротехникăллă мероприятисене кирлĕ пек пурнăçласа пыманнинчен килнĕ.

Кăçалхи çул ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса ирттерес, тухăçлă тырпул туса илес тĕлĕшпе Канаш районĕ Шăхасан районĕпе ăмăртăва тухрĕ. Районри колхозсем кăçал кашни гектартан 14 центнер тĕштырă туса илме обязательство илчĕç. Уйрăм колхозсем 18—20 центнер тĕштырă туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

Çĕнĕ Шелттемри «Хĕрлĕ çăлтăр» колхоз колхозникĕсем кăçалхи çул хăйсем умне гектартан 20 центнертан кая мар тĕштырă туса илес задача лартнă. Вĕсем вăйлă тырпулшăн большевикла кĕрешеççĕ. Колхоз çуракине пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитнĕ. Вăрлăхсене сортланă, ялхуçалăх машинисене юсаса лартнă. Уя 15 пин лав торф кăларнă. Колхозри пуçламĕш парторганизаци колхозниксем хушшинче партиллĕ-массăллă ĕçе те аван туса пырать. Çавнашкалах Катекри Киров, Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхозсенче те çуракине пĕтĕмпех хатĕрленсе çитнĕ.

Анчах та районĕпе илсен çуракине хатĕрленес ĕç япăх пырать-ха. Вăрлăхсене пĕтĕмпе те 50 процент çеç сортланă, уя тислĕк кăларассине 43 процент, торф кăларассине 50 процент, кĕл пухассине 63 процент, уйра юр тытассине 71 процент анчах пурнăçланă. Райçĕрĕç пайĕпе МТС руководителĕсем çуракине хатĕрленес ĕçе кирлĕ пек ертсе пымаççĕ, агрономсем колхозсенче сахал пулаççĕ, вăхăта ытларах район центрĕнче ирттереççĕ. Районра «ВИУМ—2» текен тырă сортламалли 4 машина пур, анчах вĕсемпе туллин усă курмаççĕ. Кивĕ Ахпӳртри Калинин ячĕпе тăракан колхозра «ВИУМ—2» текен машинăпа виçĕ уйăх хушшинче 80 процент çеç сортланă. Унпа пачах усă курмаççĕ. Апла пулин те нумай колхозсенче тырă сортламалли машина çук пирки вăрлăхсене сортлас ĕç чаранса тăрать. Çакнашкал юрăхсăр ĕçсем райçĕрĕç пайĕпе МТС руководителĕсен çаврăнăçусăрлăхĕнчен, вĕсем большевикла ĕçлесе пыманнинчен килеççĕ.

Пленум, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пленумĕ пропагандăпа агитаци ĕçĕ мĕнле пыни çинчен Канаш райкомĕн доклачĕ тăрăх йышăннă решенине тĕрĕс пурнăça кĕртсе пыма тата пропагандăпа агитаци ĕçне лайăхлатма кирли çинчен кăтартса хăварчĕ. ВКП(б) Центральный Комитечĕ парти пропагандине йĕркелесси çинчен йышăннă постановлени хыççăн, районри парторганизацинчи коммунистсенчен нумайĕшĕ парти историне харпăрхăй тĕллĕн тата лайăхрах вĕренме тытăнчĕç. Паянхи куна коммунистсенчен 117 çын парти историне учебник тăрăх вĕренсе пĕтернĕ. Халĕ вĕсем Ленинпа Сталинăн уйрăм произведенийĕсене вĕренеççĕ. Парти историне тĕплĕн вĕренсе пыракан коммунистсем производствăра та лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Акă, парти кандидачĕ Зиновьев юлташ инвалидсен «Красный воин» артелĕнче çĕвĕ çĕлекен цех начальникĕ пулса ĕçлет. Вăл парти историне учебник тăрăх вĕренсе пĕтернĕ хыççăн халĕ первоисточниксем тăрăх вĕренме пуçланă. Зиновьев юлташ ертсе пыракан цех производство планне яланах ытлашшипех тултарса пырать. Кунашкал тĕслĕхсем татах та нумай кăтартса пама пулать. Çакăнпа пĕрлех парти историне пачах вĕренменнисем те пур. Уйрăмăнах районра ертсе пыракан работниксенчен хăшпĕрисем хăйсен политика пĕлĕвне хăпартассишĕн сахал ĕçлеççĕ. Çавнашкал коммунистсен шутне Рязанов (райсоюз), Полячихин (сĕтел-пукан тăвакан фабрика), Куклов (заготзерно) кĕреççĕ.

Пленумра ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн тата парткабинетăн çитменлĕхĕсене хытă критиклерĕç. Парткабинет пуçламĕш парторганизацисемпе питех те сахал çыхăну тытать. Парткабинет работникĕсем ытларах хăйсен кабинечĕсенче ларма юратаççĕ. Çавна пула ĕнтĕ хăшпĕр коммунистсем парткабинета пачах çӳремеççĕ. Пленумра ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделне агитколлектив руководителĕсене çителĕксĕр ертсе пынишĕн критиклерĕç. Колхозсенчи пуçламĕш организацисем çумĕнчи хăшпĕр агитколлективсем хăйсен ĕçне вăхăтран вăхăта çеç туса пыраççĕ. Пленумра тухса калаçансем агитколлективсен ĕçне лайăхлатасси çинчен уйрăмăнах нумай чаранса тăчĕç.

Пленум çуракине хатĕрленес тата пропагандăпа агитаци ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем пирки конкретлă мероприятисем палăртса хăварчĕ.

Ф. АНТОНОВ.

Хĕрарăмсене тракторпа ĕçлеме вĕрентетпĕр

Хĕрарăмсенчен кадрсем хатĕрлес ыйту парторганизацисен умĕнче тăракан çивĕч ыйтусенчен пĕри пулса тăрать. 1939 çулта ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе СССР Наркомземĕ производствăран уйăрмасăр çамрăк хĕрарăмсене 100 пин çынна тракторпа ĕçлеме вĕрентсе хатĕрлесси çинчен постановлени йышăнчĕç. Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ. Çав хушăра пирĕн çĕршывра пиншер çамрăк хĕрарăмсене производствăран уйăрмасăр тракторпа ĕçлеме вĕрентнĕ. Вĕсем иртнĕ çулта паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлерĕç.

1939—40 çулсенче Шăмăршă машинно-тракторнăй станцийĕ хĕрарăмсене производствăран уйăрмасăр тракторпа ĕçлеме вĕрентес тĕлĕшпе начар мар ĕçлерĕ. Çак ĕç кăçал та сарăлса пырать. Виçĕ пысăк колхозра хĕрарăмсене тракторпа ĕçлеме вĕрентме курс организациленĕ. Курссене ертсе пыма тата хĕрарăмсене вĕрентме чи лайăх трактористсене уйăрнă. «Красная нива» колхозри трактористсен курсне коммунист Савгабин юлташ ертсе пырать. Курсра 13 хĕрарăм вĕренет, ку вăхăтчен 7 заняти ирттернĕ. «Юлташ» колхозри курса тырпула комбайнпа пуçтарса кĕрес ĕçĕн мастерĕ Корчаков юлташ ертсе пырать, вăл хĕрарăмсемпе вунă заняти ирттернĕ. Курсра вĕренекен хĕрарăмсем машинно-тракторнăй станцинче 5 кун хушши практикăллă ĕçре пулчĕç. Сталин ячĕпе тăракан колхозри курсра вунă хĕрарăм вĕренет.

Çапла эпир кăçал производствăран уйăрмасăр 32 хĕрарăма тракторпа ĕçлеме вĕрентетпĕр. Курсантсем валли вĕренӳ хатĕрĕсем çителĕклĕ.

Калас пулать, Чăваш АССР Наркомземĕ хĕрарăмсене тракторсемпе ĕçлеме вĕрентес ĕçре пире питĕ сахал пулăшать. Плансем ярса панисĕр пуçне урăх нимĕнле пулăшу пани те çук. Наркомзем тракторпа ĕçлеме миçе хĕрарăм вĕрентни çинчен сводкăсем ыйтать. Çав хушăра вĕренекенсем валли тетрадьсем, кĕнекесем тата ытти япаласене ăçтан тупассипе пачах интересленмест.

А. ПЛАТОНОВ.

Хутла вĕрентеççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Улмалуй ялĕнче хутла сахал пĕлекенсем 25 çын, пачах пĕлменнисем 5 çын шутланаççĕ. Иртнĕ çулсенче вĕсене никам та вĕрентекен пулман. Ялсовечĕ те ун çинчен шухăшламан.

Кăçал сахал пĕлекенсемпе хутла пĕлменнисене вĕрентессине комсомолецсем хăйсем çине илчĕç. Ку тĕлĕшпе 5 комсомолец ĕçлеççĕ. Вĕсем эрнере виçĕ заняти ирттереççĕ.

Нумай пулмасть комсомолецсен пухăвĕнче ялта хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕç мĕнле пыни çинчен сӳтсе яврĕç. Пуху мартăн 8-мĕш тĕлне хутла пĕлмен çынсене вĕрентсе кăларма йышăнчĕ.

ЭНДРЕЙ ПЕТĔРЕ.

Кадрсемпе куллен ĕçлесе пымалла

Çĕмĕрлери древкомбинат хамăр республикăри чи пысăк предприятисенчен пĕри. Унта ĕçлекенсен хисепĕ 2,5 пин çынран та иртет. Юлашки ултă уйăх хушшинче кăна комбината ĕçлеме 462 çынна илнĕ.

Кашни рабочи производствăра тухăçлă, хăйне панă нормăна тултарса ĕçлетĕр тесен, чăн малтанах вĕсене техника йĕркипе паллаштармалла. Техникăна пĕлмен рабочи машинăпа, сложнăй станоксемпе ĕçлеме пултараймасть. Пачах урăхла, ун пекки ĕçре чăрмантарса çеç пырать. Çавăнпа рабочисем хушшинче куллен ĕçлесе пырасси кашни заводри парторганизацин, завкомăн, дирекцин тĕп задачисенчен пĕри пулмалла.

Пирĕн комбинатра юлашки çулсенче кадрсене вĕрентсе ӳстерес тĕлĕшпе сахал мар ĕçсем тунă. Темиçе çĕршер çынна техминимум кружокĕсем тата тĕрлĕрен курссем урлă вĕрентсе кăларнă. Иртнĕ çулта кăна производствăран уйăрăлмасăр 232 çынна, производствăран хăтарса 7 çынна вĕрентсе хатĕрленĕ. Вĕсем хушшинче столярсем, малярсем, станочниксем вуншарăн шутланаççĕ.

Квалификациллĕ кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе комбинат çумĕнчи ФЗУ шкулĕ те пысăк вырăн йышăнса тăнă. 1940 çулта ку шкултан 116 ача вĕренсе тухса производствăна куçнă. Хальхи вăхăтра ФЗО шкулĕнче (ĕлĕк ФЗУ пулнăскер) 200 ачана яхăн вĕренет.

Комбинатра иртнĕ çулта 11 стахановла шкул ĕçлерĕ. Вĕсенче пĕтĕмпе 97 çын вĕреннĕ. Стахановла шкулсене комбинатри чи лайăх стахановецсем ертсе пычĕç. Вĕсем малтанхи занятисене инженерно-технически работниксем пулăшнипе ирттерчĕç. Ытти занятисем вара станок, машина патĕнче пулса пынă. Кунта рабочисене ĕçĕн опычĕпе, ĕç кунне мĕнле организаципе паллаштарнă. Çапла туни, паллах, вĕренекенсене пĕлӳ, практикăллă хăнăху панă.

Халĕ çирĕппĕнех калама пулать: стахановла шкулсенче вĕреннĕ юлташсем кĕске вăхăт хушшинчех хăйсен участокĕнчи ĕçе тĕпренех улăштарса çĕнетеççĕ. Вĕсем ĕç нормине тултарас тĕлĕшпе кăна мар, продукци пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе те паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Сăмахран, 4-мĕш номерлĕ цехри работницăсем Мария Макаровăпа Шуканова стахановла шкула вĕренме кĕриччен кулленхи нормăна тултарайман, халĕ вĕсем ялан 140—145 процент тултараççĕ, пĕр браксăр ĕçлеççĕ.

Виççĕмĕш номерлĕ цехри строгальщицăсем хатĕрлекен стахановла шкулта (руководителĕ стахановец Т. Бакланов юлташ) 7 çын вĕреннĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕсем малтанхи вăхăтра станоксемпе йĕркеллĕн ĕçлеме пĕлеймен, нормăна та тултарайман. Шкултан вĕренсе тухнă хыççăн рабочисем пурте ĕç нормисене ирттерсе тултарма пуçларĕç. Кутирев юлташ халĕ нормăна пĕрре çурă хут ирттерсе тултарать т. ыт. те.

Иртнĕ çулта эпир производствăра, çавăн пекех обществăллă ĕçре пример кăтартакансене, вĕсен пултарулăхне кура, 47 çынна ертсе пырас ĕçсене лартнă. Вăл шутран стахановецсем 33 çын. Çĕнĕ ĕçе куçнă юлташсем хăйсене шанса панă ĕçе тивĕçлĕн пурнăçласа пыраççĕ, пример кăтартаççĕ.

Елизавета Никифорова комбината ĕçлеме 1936 çулта кĕнĕ. Ун чухне вăл станоксемпе ĕçлеме пĕлмен, унăн нимĕнле квалификаци те пулман. Черновой рабочи пулса ĕçленĕ вăхăтрах техминимум кружокне вĕренме çӳренĕ. Вăхăт нумаях та иртмен, çамрăк хĕрача кружокран вĕренсе тухса шлифовальнăй станокпа ĕçлеме пуçланă. Çулталăк каялла ăна татах та ответлă вырăна — техприемщика куçарнă.

Никифорова юлташ пур ĕçре те пример кăтартать, хăйĕн ĕç опычĕпе ытти рабочисене паллаштарать. Çавăншăн ĕнтĕ ăна СССР Вăрман промышленность Халăх Комиссарĕ «Отличник социалистического соревнования» значокпа наградăланă.

Комсомолец Григорий Васильев пĕчĕккренех производствăра ĕçлеме юратнă. Çичĕ çул каялла вăл ФЗУ шкулĕнчен вĕренсе тухсан комбината ĕçлеме куçнă. Малтанах станочник, унтан смена мастерĕ пулнă, халĕ акă вăл диспетчер пулса ĕçлет. Иртнĕ çулта ЧАССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Васильев юлташа Хисеплĕ грамота парса наградăланă.

Комбината рядовой рабочине килсе кĕнĕ Семен Бойков юлташ та халĕ 4-мĕш номерлĕ цехра смена мастерĕ пулса ĕçлет. Егор Овтин юлташ диспетчерта ĕçлет. Иккĕшĕ те ĕçре пример кăтартаççĕ.

Хальхи вăхăтра комбинатра рабочисемпе инженерно-технически работниксем пĕр шухăш-кăмăлпа пурăнаççĕ — Пĕтĕм Союзри XVIII партконференцине чаплă парнесем хатĕрленипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Цехпа цех, сменăпа смена, бригадăпа бригада тата уйрăм рабочисем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Çавна май стахановецсен хисепĕ те ӳссех пырать. Январĕн 1-мĕшне стахановецсем 874 çын, ударниксем 197 çын пулнă пулсан, паянхи куна вĕсен йышĕ татах та ӳсрĕ.

Партконференци умĕнхи ăмăрту 1941 хуçалăх çулĕн пĕрремĕш уйăхĕнче начар мар результатсем пачĕ. Комбинат коллективĕ январь уйăх планне хатĕр продукци туса кăларас тĕлĕшпе 114 процент ытла тултарчĕ. Уйрăм цехсемпе бригадăсем тата рабочисем унтан та лайăхрах тĕслĕхсем кăтартрĕç. Çапла, сăмахран, Ерантаев, Галин, Грачев, Гайняшев, Афонин юлташсен сменисем плана куллен 150—200 процент тултараççĕ.

Квалификациллĕ кадрсем кирек мĕнле ĕçе те татса параççĕ. Производство ĕçне ăнăçлăн туса пырасси пĕтĕмпех вĕсенчен килет. Çавăнпа кадрсене вĕрентсе, вĕсемпе куллен ĕçлесе пымалла.

К. ДМИТРИЕВ.

Çĕмĕрлери древкомбинатăн кадрсен пайĕн начальникĕ.

«Динамо» колхозăн (Куславкка районĕ) малта пыракан çыннисем. «УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): 1-мĕш бригадăри звеньевой А. И. Айдарова, пăру пăхакан стахановка Е. Мизякова, машиновед М. В. Чуриков, колхоз председателĕ И. Т. Рыбаков, рядовой колхозник, белофинсене хирĕç пынă çапăçусен участникĕ Г. Н. Щеголев, ударник А. А. Спиридонов, звеньевой Е. Д. Сорокина тата вулав çурчĕн заведующийĕ Е. Чернов.

К. Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ.

Вăрман хатĕрлевĕнче

ОКТЯБРЬСКОЕ. Кудемерти «Коммунизм» колхозра вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлеме уйрăм бригада турĕç. Бригада çак кунсенче вăрман касма тухса карĕ. Колхозниксем вăрман ĕçне малтанхи кунсенчех хастарлăн тытăнчĕç. 450 кубометр йывăç касса хатĕрленĕ.

Вăрман хатĕрлевĕнче уйрăмăнах М. Нарзыков, Ф. Федоров, И. Григорьев юлташсем лайăх ĕçлеççĕ, кулленхи ĕç нормине 140—150 процент тултарса пыраççĕ.

Бригадăра комсомолецсем те пур. Вĕсем вăрманта ĕçлекен колхозниксем хушшинче хаçат-журналсем вуласа параççĕ, калаçусем ирттереççĕ.

Э. П.

Илья ***ТУКТАШ***

ТĂВАН ÇĔРШЫВ

(Халăх юрри-сăввисем)

Тăван çĕршыв!.. Совет çĕршывĕ!

Мĕн пур совет ĕççыннишĕн çак сăмахран аслăраххи, хаклăраххи, пахараххи?

Сарлака совет халăхĕн чечекленекен çĕршывĕ. Мускавран пуçласа инçетри окраинăсене çитиччен, ăшă кăнтăртан пуçласа сивĕ тинĕссем таран чăн-чăн ирĕклĕ пурнăç хуçи пулса çӳрет совет ĕççынни хăйĕн тăван çĕршывĕнче. Пур çĕрте те хаваслă пурнăç анлă Атăл юхăмĕ пек юхать.

Сарлака ман юратнă çĕршывăм!
Вăрмансем, хирсем нумай унта.
Эп кун пек хаваслă ирĕк пурнăç
Нихăçан, ниçта та тĕл пулман,—

тесе юрлать совет халăхĕ, хăйĕн хĕвеллĕ çĕршывне чун-чĕререн мухтаса.

Вĕçĕ-хĕррисĕр уйхирсенче хăмăш пек тырпул кашлать, нихăçан этем ури пырса пусман вырăнсенче социализмлă хуласем ӳсе-ӳсе лараççĕ; совет халăхĕн пуянлăхне ӳстерме пĕр вĕçĕмрен ĕçлеççĕ шахтăсем, рудниксем, фабрикăсем, заводсем. Çак аслă та мухтавлă çĕршывра пур халăх та пĕр тăванлăн, пĕрне-пĕри хисеплесе, пĕр-пĕринпе пĕр тан правăллă пулса пурăнать. Кашни çыннăн пичĕ çинче савăнăç, телей çиççе тăрать.

Сурхи çил вĕçет çĕршывăм тăрăх,
Хаваспа сиксе вĕрет кунçул.
Пирĕн пек савма-кулмашкăн урăх
Тĕнчере никам та пĕлес çук,—

тесе янратать совет халăхĕ, савăнăçпа телее, юлташлăхпа туслăха, пĕтĕм халăхсен тăванлăхне мухтаса. Ирĕклĕ халăхсен хăватлă хорĕнче кашни халăхăн хăйĕн сасси пур. Пирĕн чăваш ĕççыннийĕсем те пĕтĕм тулли сасăпа шăрантараççĕ сăвă-юрăсем социализмлă тăван çĕршыв çинчен.

Атăлĕсем анлă, шывĕ тăрă,—
Урхамаха мĕншĕн шăварам мар?
Çĕршывăмăр аслă, пурнăç ирĕк,—
Пĕр савăнса мĕншĕн юрлам мар?
Авăтать-çке куккук, юрлать шăпчăк
Хăмăшпала хăях хушшинче;
Савăнать-çке чунăм, юрлать чĕрем
Ырлăхпала телей хушшинче, —

тесе юрлать чăваш ĕççынни, хăйĕн музыкăллă кăмăлне нихăçан пулман пек хавхалантарса. Унăн авалхи юрри-кĕввисем пачах урăхла пулнă. Вăл авал «ырлăхпала телей» мĕн иккенне пĕлме те пултарайман, ун çинчен чĕрипе кăна ĕмĕтленнĕ. Патша саманинчи чăваш халăхĕн юрри «ырлăхпа телей» çинчен мар, хуйхăпа суйхă çинчен пулнă. Акă ун пек хуйхăллă юрăсен пĕр тĕслĕхĕ:

Авăтать-çке куккук, юрлать шăпчăк
Хăяхпала хăмăш хушшинче.
Иртет-çке ĕмĕр, юлать кунçул
Хуйхăпала куççуль хушшинче...

Мĕнле контраст, мĕнле пысăк улшăну! Çав калăппа тунă юррах телейлĕ саманара пачах урăхла—хаваслăн та савăнăçлăн янăраса кайрĕ.

Ырлăхпа пурăнакан этемĕн чĕри нихăçан та ватăлмасть. Вăл яланах çамрăк пулассăн, пĕр ватăлмасăр, вилĕм мĕнне пĕлмесĕр ĕмĕр ĕмĕр юрласшăн.

Куллен куç хупмалла ма тунă-ши?
Ĕмĕр тĕнче çути курăттăм.
Пире пĕр вилмелле ма тунă-ши?
Пĕр вилмесĕр ĕмĕр пурнăттăм!

Укăлчара текех талпиçен çук,
Пулсассăн та йĕппи чикес çук.
Ман чĕрере текех куççулĕ çук,
Пулсассăн та чуна çиес çук...

Акă мĕнле юрăсем шăрантараççĕ пирĕн юрăççсем телейлĕ те савăнăçлă пурнăç çинчен, социализмлă аслă тăван çĕршыв çинчен. Тăван çĕршыв пирĕншĕн тăван анне пек хаклă, ăна эпир нимĕнле хаяр тăшмана та парас çук:

Акăшĕсем шурă, тăрни кăвак,
Мĕншĕн кайăк тесе калас мар?
Хам çуралнă тăван çĕршывăма
Мĕншĕн анне тесе калас мар?

Ларассăм çук çыран ай хĕрринче
Çӳлтен кимĕ шуса аниччен.
Парассăм çук тăван çĕршывăма
Нимле хăруш тăшман аллине.

Сталинла Конституцин хĕвелĕ ăшшинче чечекленсе ӳсекен тăван çĕршыв! Мĕн пур-ши çак сăмахран аслăраххи, хаклăраххи, пахараххи? Ахальрен мар халăх унăн чапĕпе мухтавне чĕрери чи ăшă сăмахсемпе мухтаса юрлать, ун никам çĕнейми паттăрлăхĕ çинчен çĕрен-çĕнĕ юрăсем хурса шăрантарать.

Сут кӳлĕри тăр шыва
Ирхи сывлăм çитес çук.
Хамăр аслă çĕршыва
Нимле тăшман çĕнес çук.

Сенкер çеçке мĕн тĕрлĕ?
Сăнĕ хитре çав тĕрлĕ.
Хамăр çĕршыв мĕн тĕрлĕ?
Темрен хаклă çав тĕрлĕ!

Сад пахчинчи сар чечек
Саркаланса ешĕрет;
Чечекрен те хитререх
Тăван çĕршыв ешĕрет.

Сад пахчинчи сар кайăк
Юрлать кĕмĕл сассипе.
Хамăр тăван çĕршывра
Пурнăç — чечек çыххи пек.

* * *

«Тăван çĕршыва сыхласси кашни гражданинăн таса тивĕçĕ пулса тăрать», тесе çырнă халăхсен ылттăн кĕнекинче — Сталинла Конституцире. Тăван çĕршыва сыхласси пирĕн Союзри кашни гражданинăн чи сăваплă та мухтавлă ĕçĕ. Совет гражданинĕ хăйĕн социализмлă тăван çĕршывне чунтан чĕререн юратать, унăн оборонине куллен-кун çирĕплетсе пырать. Ирсĕр тăшман тапăнас-тăвас пулсассăн, эпир вĕсене кашни сехетрех, кашни минутрах отпор памашкăн хатĕр!

Патша Российĕнчи халăхсен тăван çĕршывĕ пулман. Вĕсене капиталистсемпе улпутсем хĕсĕрлесе, пусмăрласа пурăннă. Ĕççыннисен хăйсен интересĕсене мар, мулхуçисен интересĕсене сыхлама тивнĕ. Çак шутпала рабочисемпе хресченсене ирĕксĕрех патша çарне хăвала-хăвала кайнă, империализмлă вăрçăсене чиксе, вĕсен юнĕсене юхтарнă.

Çавтери тертлĕ те асаплă пулнă авалхи ылханлă салтак службби. Вăл тертпе асаплăх вак халăхсем çине татах та ытларах пусса тăнă. Çавăнпа та патша саманинчи çамрăксем салтак шăпине нимрен йывăр шăпа вырăнне шутланă. Приема кĕрес умĕн темиçе эрне малтан вĕсен хурлăхлă юрри янăранă:

Прием алăк — кĕленче алăк,
Ан хуп хытă, çĕмĕрлет.
Çĕмĕрлме мар, çунса кайтăр
Ман çамрăк пуç çухалать.

Ман урари Хусан атти
Пусмассерен шăтăртатать.
Салтак ячĕ тухнипеле
Куçран куççул шăпăртатать...

Урăхла пулма та пултарайман, мĕншĕн тесен салтак службби, мăшкăлсăр, патаксăр, этем тивĕçлĕхне таптаса тăкнисĕр пуçне урăх нимĕн те паман. Çавăнпа та салтака ăсанакансен юррисене çав хурлăхлă сăвăсем ирĕксĕрех кĕрсе кайнă. Вĕсен пĕр кайсассăн каялла чипер те сывах таврăнса килес шанчăк та пулман. Акă мĕнле юрăсем хунă ун пирки:

Кăвак лаша çилхи сулахайра,
Хăçан çаврăнĕ-ши сылтăма?
Çакă килтен тухса пĕр ăсансан
Хăçан каялла килейĕп çаврăнса?
Хура чĕкеç килет юр кайсан,
Эпир килеес çук пĕр кайсан...

Тепĕр енчен, авалхи салтак юррисенче эпир патшана хăйне мĕнле хак панине те куратпăр. Акă, сăмахран:

Аттеех те лаши, тур лаши
Авкаланать турта хушшинче.
Ай-хай-ах та пуçăм, çамрăк пуç
Нушаланать патша аллинче.

Патшаннах та хули ай чул хула,
Чул пулин те чунăм пĕр туртмасть.
Аттеех те çурчĕ ай çĕрĕк çурт,
Çĕрĕк çурт пулин те чун туртать...

Çакăнта илсе кăтартнă юрăсене пĕтĕçтерсе пăхсан, вĕсенчен эпир нимĕнрен малтан вĕçĕмсĕр хурлăх, пысăк хуйхă сăрхăнса тухнине тата патша саманине кураймасăр ылханса питлекен çилĕ çĕкленнине куратпăр.

Мĕн çинчен юрлаççĕ-ха халĕ пирĕн Хĕрлĕ Çара каякан мухтавлă призывниксем? Вĕсем хăйсем Çара юрăхлă пулнипе савăнса, тăван çĕршыва тăшмансенчен сыхлама тивĕçлĕ пулнипе хĕпĕртесе юрлаççĕ. Ĕлĕкхи вăхăтра çамрăксене патша нушине курма хура куççульпеле ăсатса янă пулсан, хальхи вăхăтра Хĕрлĕ Çара каякансене чĕре тулли савăнăçпа ăсатаççĕ. Призывниксем никамран малтан хăйсем ӳкĕтлеççĕ çапла нумашкăн:

Анне, маншăн ан макăр,
Пирĕн умра çул такăр.
Такăр çулпа утатпăр,
Хĕрлĕ Çара каятпăр.
Савăн, анне, манпала,
Маншăн эсĕ ан кулян.
Эп каятăп сыхлама
Хамăр тăван çĕршыва.
Мĕншĕн тесессĕн:
Кăмакара кăвар пур,
Люшка хупса хурас мар.
Йĕритавра тăшман пур,—
Сыхлăх ĕçне вăйлатар.

Савнийĕсем те хăйсен каччисене питĕ тулли кăмăлпа ăсатса яраççĕ мухтавлă Хĕрлĕ Çара:

Хутлам-хутлам тилхепи
Сентре çинче выртинччĕ.
Чун юратнă сар ачи
Хĕрлĕ Çарта пулинччĕ.
Пӳрт умĕнчи чиене
Тат-ха, савни, ытларах.
Совет Союз чиккине
Сыхла, савни, ытларах.

Призывниксен юррисемпе такмакĕсене паянхи кунри событисем те кĕрсе пыраççĕ:

Ан чик, сысна, сăмсуна
Колхоз ешĕл пахчине.
Ан чик пуçна, эс, тăшман,
Совет Союз чиккине
Урса кайнă йыттине
Сăмса урлă патăмăр.
Ирсĕр белофинсене
Шăлне хуçса ятăмăр.

Юлашкинчен çакна каламалла: хальхи призывниксен юрринчи характерлă мотив—вăл тăван çĕршыва тăшмансем килсе тапăнасран икĕ куçа сыхласа усранă пек сыхласа усрасси, çак телейлĕ тивĕçлĕхе чыслăн пурнăçласси:

Сысна çерем çĕтесрен
Тимĕр карта тытăпăр.
Тăшман килсе кĕресрен
Ялан сыхă тăрăпăр!



УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Америкăри «Вĕçекен крепость» текен бомбардировщик.

ТАСС фото-ӳкерчĕкĕ.

Европăри тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ, 1941 çулти февралĕн-10-мĕш)

Çурçĕр Африкăра Англи войскисен операцийĕсем Бенгази патĕнчен кăнтăр еннелле сарăлса пыраççĕ. Англи войскисен малти отрячĕсем, тенĕ Англи сводкинче, Бенгазирен кăнтăр еннелле 175 миляра чугунçул çинчи Эль-Агеил пунктне туртса илнĕ, çапла майпа вĕсем чугунçул çинчи пысăк Солук пункчĕпе Аджедаби хушшинче тинĕс çыранне тухнă. Рейтер агентствин ятарласах кайнă корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра çак участокра вăрçă ĕçĕсем сарăлса пыраççĕ. Итали авиацийĕ, тенĕ Итали сводкинче, Куфра оазисĕ патĕнче англичансен мотомеханизированнăй войскисен колонни çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Февралĕн 9-мĕшпе 10-мĕшĕнче Эритрейăра, Абиссинире тата Итали Сомалийĕнче çапăçусем пынă. Итали командованийĕ февралĕн 9-мĕшĕнче кăларнă сводкăра пĕлтернĕ тăрăх, Керена секторĕнче англичансем хăйсен атакисене çĕнĕрен пуçласа янă. Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи çарĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Керена районĕнчи позицисене хӳтлесе тăракан войскăсене пулăшма итальянецсем унта подкреплениссем илсе пынă. Керенăран кăнтăр енче Англи войскисем Арреса патнелле чакакан итальянецсен чаçĕсене хăваласа пынă.

Абиссинире Англи войскисем Гондар патнелле халиччен пек мар, хуллентрех куçса пыраççĕ, мĕншĕн тесен Англи войскисем иртсе пыракан çул çине итальянецсем питех те нумай минăсем лартса хăварнă. Абиссинири фронтăн кăнтăр участокĕнче Англи чаçĕсем Горайрен çурçĕр-хĕвеланăç енчи Эль-Обек портне туртса илнĕ (Абиссинипе Кени хушшинчи чикĕрен 35 километрта).

Итали командованийĕ февралĕн 10-мĕшĕнче кăларнă сводкăра Италипе Англи авиацийĕсен активлăхĕ çинчен каланă. Керена районĕнче Итали авиацийĕ Англи войскисем, грузсемпе артиллери çине бомбăсем пырса пăрахнă. Англи авиацийĕ, Керенăри ĕçсемсĕр пуçне, Дангила çине (Тан кӳллинчен кăнтăр енче) тата Десси çине (Абиссинире) пырса тапăннă.

Юлашки икĕ кун хушшинче Албанири фронтăн центральнăй секторĕнче активлă çапăçусем сарăлса кайнă. Грецири «Пройя» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, кунта итальянецсем çĕнĕ контрнаступлени тунă, анчах та ăна грексем сирсе янă, итальянецсене пысăк çухатусем кӳнĕ. Тепелене секторĕнче Греци войскисем кăштах малалла кайнă. Авиаци активлăхĕ палăрать. Итали командованийĕн сводкинче çапла каланă: февралĕн 9-мĕшĕнче Итали авиацийĕ грексен позицийĕсемпе коммуникацийĕсем çине, çавăн пекех Коринфо заливĕн çыранĕнчи тинĕс-çар базисем çине тата Салоникири çар объекчĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Англи самолечĕсен соединенийĕсем, тет Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ, Валона çине бомбăсем пыра-пыра пăрахаççĕ. Валонăна Итали подкрепленийĕсем пыраççĕ.

Февралĕн 9-мĕшĕнче, тет Рейтер агентстви, Англи флочĕн йывăр тата çăмăл карапĕсен соединенийĕсем Италин Гэнуя хулинчи тинĕс-çар бази çине персе тăнă. Итали сводкинче каланă тăрăх, Гэнуя базинче снарядсем тивнипе 72 çын вилнĕ тата 226 çын аманнă. Англи самолечĕсем Ливорно çине тата Пиза хĕррисем çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Февралĕн 9-мĕшĕнче, тенĕ Германи командованийĕ кăларнă сводкăра, Германи бомбардировщикĕсем Португалирен 500 километрта Англи суднисен караванне атакăланă, темиçе парохода путарнă. Ыран февралĕн 10-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи бомбардировщикĕсем Лондонри тата Кăнтăр-Хĕвелтухăç Англири вăрçă ĕçĕсемшĕн кирлĕ объектсем çине пыра-пыра тапăннă. Англин çыранти оборонин самолечĕсем, тет Рейтер агентстви, Норвеги çыранĕ патĕнче нимĕçсен грузовой суднисен караванне атакăланă (каравана эсминецсем хӳтлесе пынă). Ыран февралĕн 9-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк мар соединенийĕ Мангеймри промышленность объекчĕсем çине пырса тапăннă. Февралĕн 8-мĕшĕнче Англин пĕрерĕн вĕçсе пынă самолечĕсем Роттердама Флиссингенри чылай объектсем çине бомбăсем пăрахнă.

Февралĕн 10-мĕш. (ТАСС).

Англипе Румыни хушшинчи дипломатиллĕ отношенисене татнă

ЛОНДОН, февралĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи правительстви хăйĕн посланникне Бухарестран чĕнсе илме йышăннă. Паян кăнтăр тĕлĕнче Англи посланникĕ Румыни правительствине нота панă тата хăйĕн паспорчĕсене ыйтнă.

Бухарестри арестсемпе ухтарусем

БЕРЛИН, февралĕн 9-мĕш. (ТАСС). Румынири хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Бухарестра пурĕ 3.112 легионера, провинцире 3.862 легионера арестленĕ.

Февралĕн 6-мĕшĕнче Бухарестри çар сучĕ 7 пăлхавçă-легионера 5—20 çул хушши каторгăра ĕçлеттермелле, 35 çынна 5 çула çити тĕрмере хупса усрамалла тунă.

Румынири Тульча хулин префекчĕ пулнă Предеску Болгарине тухса тарнă

БЕРЛИН, февралĕн 9-мĕш. (ТАСС). Трансоцеан агентстви çапла пĕлтерет: Румынири Çурçĕр Добруджăри Тульча хулин префекчĕ пулнă Предеску тата унăн канцелярийĕн начальникĕ пулнă çын Софине пырса çитнĕ. Вĕсем иккĕшĕ те — Антонеску генерала хирĕç пуçланă восстани участникĕсем, восстание утарса лартнă хыççăн Румынирен тухса тарнă.

Кăнтăр Африка Союзĕнчи шалти политикăллă кĕрешӳ

ЛОНДОН, февралĕн 8-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Кэптаунран пĕлтернĕ тăрăх, Кăнтăр Африка Союзĕн депутатсен палатин ларăвĕнче оппозици лидерĕ доктор Малан Смэтс правительствине шанманни çинчен резолюци тăратнă. Резолюцине йышăнман, ăна хирĕç 78 çын, йышăнассишĕн — 59 çын сасăланă. Çав ларурах правительствăн тулашри тата шалти политикине ырланă.

* * *

Кăнтăр Африка Союзĕн парламентĕнчи оппозици лидерĕ доктор Малан националистсен партине ертсе пырать, çак парти Кăнтăр Африка Союзĕ вăрçа хутшăннине хирĕç тăрать. 1939 çул пуçламĕшĕнче Малан Кăнтăр Африка Союзне Британи империйĕнчен кăларасси çинчен требовани тăратнă. 1940 çулти январь вĕçĕнче Малан Англине пăхăнман Кăнтăр Африка республикин туса хурасси çинчен калакан заявлени пичетлесе кăларнă.

Кембриджри университет преподавателĕсен протесчĕ

ЛОНДОН, февралĕн 9-мĕш. (ТАСС). Кембриджри университет колледжĕсенчен пĕрин директорĕ Рэвен тата çак университетри ытти преподавательсем правительство коммунистла «Дейли Уоркер» хаçата хупнине хирĕç протест туса резолюци йышăннă. Университет преподавателĕсем протест резолюцине Англин шалти ĕçсемпе шалти хăрушсăрлăх министрĕ Моррисон патне ярса панă.

КĔСКЕН

✦ Январь уйăхĕн вĕçĕнче Çурçĕр-Хĕвеланăç Германире вăйлă çил-тăмансем вăхăтĕнче чугунçулсем çинче катастрофа пулнă, ăна пула вăрçăра тыткăна лекнĕ 86 бельгиец вилнĕ.

✦ Швецире хут, картон тата конверт таврашне ютçĕршывсене сутма чарнă. Çак шута толь тата хаçат хучĕ кĕмест.

✦ Францире 62 муниципальнăй совета салатса янă, муниципалистсен 24 чиновникне, 10 генеральнăй советникне тата 9 муниципальнăй советника ĕçрен кăларнă.

Совет Союзĕн Геройĕ тата Маршалĕ С. К. Тимошенко ячĕпе пĕтĕм Хĕрлĕ Çарта иртterекен йĕлтĕрлĕ кросс пуçланнă

МУСКАВ ÇАР ОКРУГĔ, февралĕн 9-мĕш. (ТАСС). Красноармеецсем, командирсем тата политработниксем — Совет Союзĕн Геройĕ тата Маршалĕ С. К. Тимошенко ячĕпе пĕтĕм Хĕрлĕ Çарта иртterекен йĕлтĕрлĕ кросăн участникĕсем хĕллехи лагерăн анлă та юрлă уйне стройпа тăрса тухнă. Походра кирлĕ мĕнпур снаряженисем, йĕлтĕрсем — çурăм çинче.

Мускав Çар Округ войскисен командующийĕ арми генералĕ И. В. Тюленев пĕтĕм Хĕрлĕ Çарăн паллă праçникĕ — С. К. Тимошенко ячĕпе иртterекен йĕлтĕрлĕ кросс пуçланнă ятпа боецсене, командирсене тата политработниксене сывлăх сунса саламлать.

Ирхине шăпах 10 сехетре йĕлтĕрçĕсен группи старт илет. 20 километрлă дистанцире курсант Евсеев юлташ çĕнтернĕ: вăл çак дистанцине 1 сехет те 35 минутăра ярăнса тухнă. Совет Союзĕн Геройĕ генерал-майор Лелюшенко боеца çак чаплă результатшăн тав тăвать.

Амăртусем хыççăн хĕллехи лагерьте Мускаври театрсенчи артистсем концерт панă.

ЗАБАЙКАЛЬЕ ÇАР ОКРУГĔ, февралĕн 9-мĕш. (ТАСС). Ирхине шăпах 10 сехетре Н-ски чаçĕн пĕтĕм личнăй составĕ старт площадкине тухнă.

Чи малтан капитан Черниковăн подразделенийĕ тапранса каять. Термометр кăтартать: 44 градус сивĕ. Йĕлтĕрçĕсем сăртсем, çырма-çатрасем урлă пысăк ăсталăхпа иртсе пыраççĕ. Лайăх хатĕрленни сисĕнет. 59 минута иртсен финиша пуринчен малтан иккĕмĕш рангри воентехник Кондрашкин пырса çитет. 10 километрлă дистанцине кросс участникĕсем пурте çăмăллăнах ярăнса тухаççĕ.

Амăрту сĕм каçченех пынă. Н-ски чаçре пур боецсемпе командирсем те кроса хутшăннă.

МИНСК, февралĕн 9-мĕш. (ТАСС). Совет Союзĕн Геройĕ тата Маршалĕ С. К. Тимошенко ячĕпе иртterекен кросăн пĕрремĕш кунĕ Минскри М. И. Калинин ячĕпе тăракан пехота училищи XX çул тултарнине уявланă кун пуçланнă.

Курсантсем, командирсем тата политработниксем взвод хыççăн взводпа уя тухаççĕ.

Хĕвеланăçĕнчи Уйрăм Çар Округ войскисен командующийĕ Совет Союзĕн Геройĕ танклă войскăсен генерал-полковникĕ Павлов хĕрлĕ лентăна касса татать. Боевой марш кĕвви кĕрлет. Лейтенант Рубановăн взвочĕ 10 километрлă дистанцине ярăнса тухма тапранса каять.

Кашни пиллĕк минутранах çĕнĕ взвод тапранса каять.

Тикĕс мар вырăнсем тăрăх йĕлтĕрçĕсем вĕçĕ-хĕррисĕр карталанса пыраççĕ. 58 минута иртсен, финиш лентине курсант Рубин çитсе татать.

Комсомолецсен йĕлтĕрлĕ кросĕ

Комсомол организацисен радио тăрăх пулса иртнĕ республикăри канашлăвĕ

Февралĕн 8-мĕшĕнче комсомолецсен Пĕтĕм Союзри йĕлтĕрлĕ кросне иртерес ыйтупа радио тăрăх канашлу пулса иртнĕ. Унта ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн секретарĕсем Пароятников, Михайлов, Башкирова юлташсем, физкультурăпа спорт ĕçĕсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи комитечĕн председателĕ Прокопьев, ВЛКСМ обкомĕн çарпа физкультура отделĕн заведующийĕ Хрусталев юлташсем, «Çамрăк большевик» тата «Пионер сасси» хаçатсен редакторĕсем пулчĕç.

Районсенчи радиоузелсенче ВЛКСМ райкомĕн секретарĕсем, бюро членĕсем тата çарпа физкультура организацисен работникĕсем пухăннă.

Канашлăва ВЛКСМ Чăваш обкомĕн секретарĕ Пароятников юлташ уçрĕ. Вăл комсомолецсен йĕлтĕрлĕ кросĕн малтанхи кунĕсем мĕнле иртни çинчен каласа пачĕ.

Канашлура чи пирвай ВЛКСМ Канаш райкомĕн секретарĕ Кузнецов юлташ сăмах илет. Вăл районра кросăн малтанхи кунĕсем мĕнле иртни çинчен каласа пачĕ. Февралĕн 2-мĕшĕнче кроса 37 пуçламĕш организацинче иртternĕ, пурĕ 47 команда хутшăннă.

Кросăн малтанхи кунĕсенче пысăк çитменлĕхсем палăрнă. Чугунçул çинче тата вагонсем юсакан заводра кроса хутшăнакансен хисепĕ ытла та сахал пулнă.

ВЛКСМ Сĕнтĕр райкомĕн секретарĕ Иванова юлташ пĕлтернĕ тăрăх, кроса 336 комсомолец хутшăннă. Ювановăри вăтам шкулта кросс ячĕпе военизированнăй поход туса иртternĕ, унта 88 çын пулнă.

Улатăр районĕнче пирвайхи кунсенче кроса пĕр çын та хутшăнман. Çакă вăл ВЛКСМ райкомĕ çителĕксĕр ĕçлесе пынине кăтартса парать.

Канашлура комсомолăн Тăвай, Хĕрлĕ Чутай, Етĕрне, Куславкка райкомĕсен секретарĕсем т. ыт. те тухса сăмах каларĕç. Вĕсем каланă тăрăх, комсомол организацисем кроса иртерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлени курăнчĕ.

ВЛКСМ обкомĕн секретарĕ Пароятников юлташ канашлу итогĕсем çинчен каласа пачĕ. Вăл кросăн малтанхи кунĕсенче палăртнă çитменлĕхсене пĕтермелли практикăллă кăтартусем парса хăварчĕ.

Комсомол организацисен çак канашлу кăтартăвĕсене тĕплĕн пурнăçласа пымалла. Кашни комсомолецăн кроса хутшăнмалла.

Çутĕç работникĕсен канашлăвĕ

Февралĕн 10-мĕшĕнче çутĕç работникĕсен республикăри канашлăвĕ уçăлчĕ. Канашлу икĕ ыйту сӳтсе явать: çутĕç работникĕсен Пĕтĕм Российăри канашлăвĕн итогĕсем тата Чăваш АСС Республикинче халăха вĕрентес ĕçе лайăхлатмалли мероприятисем çинчен; политпросвет ĕçĕ мĕнле тăни тата çитĕннисем хушшинче хутпĕлменлĕхпе хутла сахал пĕлнине пĕтерессi çинчен.

Пĕрремĕш ыйтупа Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ Евлампьев юлташ тата иккĕмĕш ыйтупа ЧАССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн политпросвет управлени начальникĕ Семенов юлташ докладсем турĕç. Дакладчиксем тата пренире тухса каланă юлташсем те халăха вĕрентес ĕçри, çавăн пекех политпросвет ĕçĕнчи, хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçри çитĕнӳсене палăртнипе пĕрлех, ĕçри çитменлĕхсене критиклерĕç, малашне ĕçе лайăхлатмалли мероприятисене палăртрĕç.

Канашлу ĕçне ВКП(б) райкомĕсен пропагандăпа агитаци отделĕсен заведующийĕсем те хутшăнчĕç.

Лондонри прожектор установкисем

(ТАСС корреспонденчĕн çырăвĕ)

Англи çарĕн зенитнăй оборонин управленийĕ чĕннипе ТАСС корреспонденчĕ ноябрь уйăхĕнче прожектор батарейине пырса курнă. Çак батарейăн штабĕ столицăн инçетри окраинисенчен пĕринче XVII-мĕш ĕмĕрте тунă илемлĕ особнякра вырнаçса тăрать. Лондон йĕри-тавра нумай прожекторсем лартса тухнă, вĕсен тĕллевĕ — зенитнăй батарейăсене кăна мар, тата истребительсен авиацине те пулăшу парасси, мĕншĕн тесен, кунта каланă тăрăх, çĕрле килсе тапăнакан самолетсене хирĕç кĕрешес ĕçре истребительсем майĕпен практикăллă вырăн йышăнма пуçлаççĕ. Прожекторсене пĕрерĕн лартса тухнă, вĕсен хушши пысăк мар — пĕр-ик километр шутланать. Вĕсен дислокацийĕ зенитнăй батарейăсен дислокацийĕпе таччăн килĕшсе тăрать. Ултă прожектор е, Англи çарĕнче каларĕш, ултă «лампа», кашниех, хăйсем патĕнче ĕçлекен отделенипе пĕрле, прожектор роти пулса тăраççĕ, тăватă рота — прожектор батарейи пулса тăрать. Прожектор полкĕ тăватă батарейăран тăрать. Хăйне уйрăм боевой чăмăр вăл — прожектор отделенийĕ, оперативлă-хуçалăхлă тĕп единица — батарея.

Н-ски прожектор батарейин комсоставĕ — офицер-профессионалсем мар. Майор, батарея командирĕ, мирлĕ вăхăтра табак трестĕнче ĕçленĕ, анчах та нумай вăхăт хушши территориальнăй çарта учетра тăнă. Унăн иккĕ капитанĕ, тăватă лейтенанчĕ, тăватă кĕçĕн лейтенанчĕ — служащисем, коммерсантсем, коммивояжерсем, фермер, юрисконсульт тата студент. Салтаксем 500 çын ытларах шутланаççĕ, вĕсен пысăкрах пайĕ, зенитнăй батарейăри пек мар, индустриальнăй рабочисем мар, — конторăри работниксем, служащисем, складсенчи рабочисем, хуласенчи предприятисен работникĕсем. Вĕсем хушшинче темиçе инструментальщик, электромонтерсем, шоферсем пур пулсан, ун вырăнне адвокатсемпе чертежниксем тата пĕр... виконт та пур. Батарейăри çынсен 75 процентне лондонецсенчен пухнă, вĕсем хушшинче, Англири ытти вырăнсенчи пек мар, служащисен проценчĕ пысăкрах.

Малтан салтаксем чаçре е штаб çумĕнче организациленĕ курссенче вĕренеççĕ, зенитчиксене вара специальнăй шкулсенче вĕрентеççĕ. Вĕрентессе икĕ уйăх хушши вĕрентеççĕ.

Англипе Германи хушшинчи вăрçăн хальхи условийĕсенче прожектор батарейи противнике хирĕç кĕрешес ĕçре, пехота пек мар, пысăкрах вырăн йышăнса тăрать. Çакна ăна ТАСС корреспонденчĕ 24 боевой точкăран пĕрне çĕрлехи вăхăтра пырса курса ĕненнĕ. Пысăк шоссепе кукăр-макăр çулсем тăрăх вунпиллĕк минута хушши çӳренĕ хыççăн, машина уçă хире тухать. Пире часовой чарса тăратать, электричествăллă хунарпа çутатса пăхать. Унтан вăл бомбардира (кĕçĕн капрала), 23 çулти йĕкĕте чĕнсе илет. Отделенин пĕтĕм ĕçĕшĕн тата отделенири 10 салтакшăн йăлтах çав бомбардир ответлă пулса тăрать. Вăл пире уй тăрăх илсе çӳрет. Прожектор установки вырнаçса ларакан площадкăна кĕнĕ çĕрте грузовик тăрать, грузовик çине дизельнăй генератор вырнаçтарса лартнă, çак генератор прожектор установкине электроэнерги парса тăрать. Инçех те мар — батарея штабĕпе телефонлă çыхăну тытмалли палатка. Унта хăшпĕр чухне противник самолечĕсем ăçталла вĕçсе пыни çинчен çӳлти инстанцисенчен асăрхаттарусем илеççĕ. Анчах та отделени ĕçĕ унтан килмест.

Малалла «лампа» — тĕреклĕ прожектор, унпа икĕ салтак ĕçлеççĕ. Прожектор çути питех те вăйлă (200 миллион свеча ытла), тесе каласа парать майор; пĕррехинче вăл 4.500 метр çӳлĕшĕнче вĕçсе пыракан самолет кабининче ларнă чух пĕр прожектор çутипе хаçата уççăнах вулама пултарнă. Эпир «лампа» патне пынă чухне салтаксем унăн темĕн пысăкĕш кантăкне тасататчĕç, мĕншĕн тесен вăл пасарса ларнă. Прожектор патĕнчен 50—60 метрта инçетри сасăсене тытакан аппарат (звукоулавливатель) ларать, вăл — хальхи вăрçă пуçланас умĕн йышăннă йышши аппарат. Сасă тытакан аппаратăн темĕн пысăкĕш тăватă хăлхи пĕлĕтелле каçăрăлса лараççĕ. Çак «хăлхасене» икĕ мăшăр наушникпе мăшăрлăн пĕрлештернĕ, наушниксене сăнавçăсем тăхăнса тăраççĕ. Пĕри инçетри сасă мĕн çӳлĕшĕнчен илтĕннине, тепри вара сасă хăш енчен илтĕннине сăнать. Звукоулавливатель ĕçĕнче асли, сăнавçăсем кăтартса панă тăрăх, аппарата çӳлелле е аялалла, сылтăмалла е сулахаялла çавăрать, сăнаса пухнă даннăйсене çутатса тăракан шкала çине çырса пыраççĕ. Тата малалла, хирĕн тепĕр енче, михĕсен стени хыçĕнче Льюис йышши пулемет тăрать, унпа пикировка тăвакан самолетсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте усă кураççĕ. Бомбардир пĕлтерет: Германи авиацийĕ кăнтăрла килсе тапăннă вăхăтра унăн отрячĕ «Дорнье» йышши пĕр самолета тата «Мессершмитт—109» йышши тепĕр самолета персе антарнă. Юлашкинчен, уй кĕтессисенче, «лампа» патĕнчен 100 метра яхăн инçетре, çавăрăнакан пукансем çинче «çĕрлехи сăнавçăсем» — икĕ салтак лараççĕ, вĕсем аппаратсăрах итлеççĕ, горизонтра кăштах сасă илтĕнсен те ун çинчен, самолетсем çывхарса килме пултарни çинчен сигнал параççĕ. Паллах ĕнтĕ, халăх нумай пурăнакан Англири пысăк хула хĕрринче çакăн пек пулăшу пурри усăсăр япала мар.

«Çаксем çумне виçĕ йывăç пӳрт, спальня, канмалли пӳлĕм тата кухня хушăр, — вара эсир пирĕн пĕтĕм хуçалăха куртăр», — тет бомбардир.

Отделенине пырса çитсен эпир çакăн çинчен пĕлтĕмĕр: полк штабĕ паян çĕрле прожекторсемпе усă курма чарнă, мĕншĕн тесен çанталăк тĕтреллĕччĕ, вăл тĕтре прожектор çутине сапаласа ярса, противнике пулăшнă кăна пулĕччĕ. Анчах кайран тĕтре сирĕлчĕ, штаб хăйĕн приказне улăштарнă.

«Хĕвеланăç енче тĕллев илтĕнет», — тесе кăшкăрать пĕр сăнавçи. Бомбардир донесени илни çинчен хыттăн кăшкăрса калать, пĕр самант хушши шухăшласа тăнă хыççăн çапла хушса калать: «Кашниех хăйĕн вырăнне! Тытăнас!» Кунта çакă паларать: противник çителĕклĕ таран çывăхра-и, ăна хирĕç ĕçсем пуçлама кирлĕ-и е çук-и, — çак ыйтăва вăл хăй шутланă пек татса парать мĕн. Сасă тытакан аппарат çавăрăнать, унăн пĕтĕм 4 «хăлхи» кăтартса панă еннелле кармашать. Вĕсем хускалнăçемĕн прожектор хăй тĕллĕнех (автоматически) кирлĕ еннелле çавăрăнать (Каланăччĕ эпир, прожектор сасă тытакан аппаратран чылаях инçетре ларать). Юлашкинчен Германи самолечĕн моторĕ кĕрлени уççăнах илтĕнме пуçлать.

— «Çутатас!» — команда парать бомбардир. Сасă тытакан аппарат патĕнче асли кнопка çине пусать, прожектор патĕнчен звонок сасси илтĕнет. Пĕр самант хушшинчех гигантла пысăк çутă пайăрки пĕлĕте çуса çӳлелле çĕкленчĕ, таçта питех те çӳлте пĕр самантлăха темĕнле япала вĕлтлетсе иртни курăнчĕ. Çакăн хыççăн, çутă пайăрки противнике кусран çухатнăччен, пĕр енче зенитнăй артиллери залпĕсем кĕрлесе кайни илтĕнчĕ, пĕлĕт çинче снарядсем сурăла-сурăла çутатаççĕ. Çак вăхăтра Германи самолечĕ айккинелле вĕçсе каять, мотора ĕçлеме чарать те прожектор çутин пайăркинчен ларса хăтăлать. Темиçе секунда иртсен каллех мотор кĕрлени илтĕнет, самолета урăх прожекторсем шыраса тупнă.

Майор çапла ăнлантарса парать: сасă тытакан аппаратăн автоматлă передачи мĕншĕн те пулин ĕçлемест пулсан, прожектор команди сăмахпа каласа паракан командăсем тăрăх ĕçлеме пултарать. Прожектор отрячĕ, тет вăл, зенитнăй батарейăпа тӳррĕмех çыхăнса тăмасть. Эпир калаçнă вăхăтра çĕнĕрен çĕнĕ тревога параççĕ. Çак отделенине уйăрса панă пĕлĕт секторĕ урлă Германи самолечĕсем сехет çурă хушшинче 5 хут вĕçсе иртрĕç. Пĕр расра, чăнах та, пĕчĕк чăрмав пулчĕ: самолет пуç тĕлĕнче вĕçнĕ пекех туйăнать, анчах шăпах çак вăхăтра дизель йĕркеллĕ ĕçлемерĕ, вара отделени «суккăр» пекех тăрса юлчĕ. Çавăн пек канăçлăн кĕтсе илнипе хăюлланса пулас, Германи самолечĕ тахăшĕсем çине пулеметсенчен пеме пуçларĕ. Вăл виçĕ хутчен йĕр хăварса вĕçекен пульăсем кăларса ячĕ. Унтан кӳршĕри прожекторсен çутисем пĕлĕте çурса çĕкленчĕç, вара пулемет сасси çухалчĕ. Çĕнĕрен лăпланса çитсен, эпир кухньăна ăшăнма кĕретпĕр, бомбардир какао пĕçерме тытăнать. «Паллах, пĕлĕтсем хулăм чухне эпир нумай ĕçех тăваймастпăр, — тет майор. — Анчах та сасă тытакан аппаратсем пулăшнипе эпир противник самолечĕ мĕн çӳлĕшĕнче тата хăш еннелле вĕçсе пыни çинчен яланах хаклă сведенисем илме пултаратпăр. Лондонри çурма-пĕлĕтлĕ çанталăк тăнă чух эпир зениткăсене пысăк усă кӳретпĕр, тесе шутлатпăр». Юлашкинчен бомбардир çапла каларĕ: «Юлашки темиçе уйăх хушшинче татти-сыпписĕрех çапăçу ĕçĕсене туса пынипе манăн отделенири кашни боецăн ĕçри хăвăртлăхĕпе пахалăхĕ питех те нумай хăпарчĕ».

Лондон.

Эстонири Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн IV съезчĕ хупăннă

ТАЛЛИН, февралĕн 9-мĕш. (ТАСС). Паян Эстонири коммунистла партин IV съезчĕн ларăвĕнче Сарэ юлташ юлашки сăмах тухса каланă.

Съезд Эстонири Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕн политикăллă линине тĕрĕс, практикăллă ĕçне çителĕклĕ, тесе йышăннă.

Эстонири Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитетне тата ревизи комиссине суйланă.

Лару вĕçĕнче Лауристин юлташ тухса каланă. Вăл делегатсене вырăнсенче съезд решенийĕсем çинчен анлăн ăнлантарса пама, ВКП(б) ленинла-сталинла Центральный Комитечĕ таврара, пире çĕнтерӳ патне илсе пыракан çын — халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ тавра татах та çирĕпрех пĕтĕçме чĕннĕ.

Залра тăвăллăн алă çупни, Сталин юлташа чысласа кăшкăрса каланă саламлă сăмахсем кĕрлесе тăраççĕ.

Паян съезд хăйĕн ĕçне туса пĕтернĕ.

Болдино ялĕнче А. С. Пушкин памятникне уçнă

ГОРЬКИЙ, февралĕн 10-мĕш. (ТАСС). А. С. Пушкин хăйĕн чи чаплă произведенийĕсенчен чылайăшне Пысăк Болдино ялĕнче çырнă. Халĕ çак ялта аслă поэтăн памятникне лартнă. Памятнике уçнă ятпа пулса иртнĕ митинга районри инçетри ялсенчен те нумай колхозниксем пухăннă.

Районри Культура çуртне Пушкин ятне панă.

А. С. Пушкина асăнса

Февралĕн 10-мĕшĕнче, Чăвашсен Государство театр, музыка тата художество училищисенче вĕренекенсемпе вĕрентекенсем вырăссен аслă поэчĕ Александр Сергеевич Пушкин вилнĕренпе 104 çул тултарнине асăнса пĕрлешӳллĕ вечер туса иртterчĕç. Вечерта пединститутра вĕрентекен литературовед Сутягин юлташ аслă поэтăн пурнăçĕпе творчестви çинчен содержанилле доклад туса пачĕ. Доклад хыççăн «В музее А. С. Пушкина» ятлă фильм кăтартрĕç.

Вечерта студентсем А. С. Пушкин сăввисене каласа пачĕç. Уйрăмах А. Родионов «Послание в Сибирь», М. Антонов «Зимнее утро», Г. Мытиков «Кавказ» сăвăсене калани питех те килĕшӳллĕ пулчĕ.

П. ЧИЧКАНОВ.

Йĕлтĕрçĕсен республикăри ăмăртăвĕ

Физкультурăпа спорт ĕçĕсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи комитечĕ февралĕн 17-мĕшпе 19-мĕш кунĕсенче, Шупашкар хулинче, йĕлтĕрçĕсен республикăри ăмăртăвне иртерет. Спорт обществисене тата колхозсенчи коллективсене пĕр-пĕрин ĕç опычĕсемпе паллаштарасси, йĕлтĕр спортне анлăн сарса пырасси, йĕлтĕрçĕсене çар ĕçĕпе хăнăхтарасси — çак ăмăртун тĕп задачисем пулса тăраççĕ. Кунсăр пуçне ăмăрту хĕллехи спорт ĕçĕсене вырăнсенче мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тухма пулăшмалла.

Ăмăртăва спорт обществисенчи тата колхозсенчи командăсем хутшăнаççĕ.

Спорт обществисем тăратакан арçынсен командисем 7 çынтан, хĕрарăмсен командисем 6 çынтан пулмалла. Ăмăрту программи тăрăх, арçынсем 20 тата 30 километра каймалла, 10 километрлă военизированнăй похода каймалла тата трамплин çинчен сикмелле. Хĕрарăмсем 5 тата 15 километра каяççĕ. Кунсăр пуçне 3×5 километрлă военизированнăй эстафетăна каймалла.

Колхозсенчи коллективсем тăратакан арçынсемпе хĕрарăмсен командисем виçшер çынтан пулмалла. Арçынсен командисен 20 километра тата 10 километрлă военизированнăй похода каймалла. Хĕрарăмсем 10 километра тата 5 километрлă военизированнăй похода каяççĕ.

«Медик», «Восход», «Динамо» тата «Спартак» спорт обществисем ăмăртăва чи вăйлă командăсем тăратаççĕ.

Ăмăрту Атăл лешъенче, учительсен канмалли çуртĕ патĕнче пулать.

Г. ИВАНОВ.

Хĕрлĕ Çар Кунне хатĕрленеççĕ

УЛАТĂР. «Красное Анютино» колхозра кăçал призыва кĕмелли çамрăксем Хĕрлĕ Çар 23 çул тултарнă куна хатĕрленме тытăнчĕç.

Призывниксем пурте Осоавиахим членне кĕчĕç. Запасра тăракан командир Балеев юлташ ертсе пынипе çар ĕçне вĕренеççĕ.

Хĕрлĕ Çар Кунне хатĕрленсе пынă май призывниксем «Ворошиловский стрелок» значокăн нормисене 27 çын, ГСО значокĕн нормисене 28 çын тата ПВХО значокĕн нормисене 31 çын пачĕç.

М. Парамонов.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧЕБОКСАРСКОМУ
Ликеро-Водочному заводу
ТРЕБУЮТСЯ опытная машинистка и бухгалтер-претензионист или юрист.
Оплата по соглашению.
Дирекция.

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. **Телефонсем:** редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн—0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн —2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство заведующийĕн—5—38, конторăн—0—23.
НТ 2219. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 146. Ф. Б. 58×84 п. л.